ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Март 4 ЫТЛАРИКУН № 46 (8698) Хакĕ 20 пус 35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ — мартăн 8-мĕшĕ çинчен. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ (1 стр.).
Н. В. Гоголь памятникне лартнă ятпа Мускавра пулнă чаплă пуху (1 стр.).
Вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: С. Федоров. — Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелесе çĕрте (2 стр.).
Е. Афанасьев. — Матвеев пропагандистăн пĕр занятийĕ (2 стр.).
Совет Правительстви США Правительствине панă нота (2 стр.).
Н. В. ГОГОЛЬ ВИЛНĔРЕНПЕ 100 ÇУЛ ТУЛТАРНИ. Проф. Н. Степанов. — Н. В. Гоголь; А. Алга. — Аслă писателĕн чăвашла тухнă кĕнекисем; Б. Алексеев. — Вилĕмсĕр комедисем чăваш сцени çинче; Русь—«Вилĕ ятсем» поэмăн XI-мĕш пайĕнчи сыпăк (3—4 стр.).
«Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн сырăвĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ—мартăн 8-мĕшĕ çинчен

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне — мартăн 8-мĕшне Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем кăçал пирĕн Тăван çĕршывăн социализмла экономикипе культури малалла хăватлăн çĕкленсе пынă условисенче уявлаççĕ.

Коммунизм строительствин сталинла программине пурнăçласа совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш пилĕк çуллăх планне ăнăçлă тултарчĕ, 1951 çулта экономикăпа культурăн пур облаçĕсенче те çĕнĕ чаплă çĕнтерÿсем тума пултарчĕ. Промышленность пысăк хăвăртлăхсемпе малалла аталанса пырать, социализмлă ялхуçалăхĕнче малалла çитĕнÿсем тунă, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те малта пыракан техника анлă ĕçе кĕрсе пырать, ĕç тухăçлăхĕ ÿсет. Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем творчествăллă пысăк çĕкленÿпе ĕçлесе пысăк гидроэлектростанцисем, каналсем тата çĕре шăвармалли системăсем тăваççĕ. Çавсене туса ĕçе яни вăл коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне тăвас ĕçри çĕнĕ пысăк ĕç пулать.

Халăх хуçалăхĕ ăнăçлă аталанса пыни совет халăхĕн материаллă пурнăçĕпе культурăллăхне пĕрмаях малалла лайăхлатса пыма май парать.

Пирĕн çĕршывра наци тупăмĕ тăтăш ÿсет, куллен кирлĕ таварсен хакĕсем йÿнелеççĕ, рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи, хресченсен тупăшĕсем çултан-çул ÿсеççĕ; пурăнмалли çурт-йĕрсем лартас ĕçе анлă сарнă. Социализм çĕршывĕнче ĕçсĕрлĕх çук. Капитализмлă çĕршывсенче вара ĕçсĕрлĕх ĕçсыннисен пурнăçĕнчи пысăк инкек пулса тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери çирĕп тата нумай вăхăта пыракан миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетессишĕн пĕрмаях çине тăрса кĕрешсе пыракан Советлă социализмлă хăватлă государство ÿсет тата тĕреклене пырать. Совет государствин çĕнтерĕвĕсем, унăн тулашри мирлĕ политики Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн авторитетне тата тĕнчери çĕршывсен хушшинчи влиянине тата ытларах ÿстереççĕ. Советлă социализмлă строй капитализмран нумай малта тăнине тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем ытларах та ытларах ăнланаççĕ.

Социализмлă государствăн хăвачне тĕреклетес тĕлĕшпе совет хĕрарăмĕсем пысăк ĕç тăваççĕ. Капитализмлă политикăпа экономика пусмăрĕнчен хăтăлнă совет хĕрарăмĕсем хăйсен ĕçри пултарулăхне анлă палăртаççĕ, вĕсем социализмлă общество активлă пултарулăх вăйĕ пулса тăчĕç. Ленин—Сталин партийĕн аслă идейисем хавхалантарнипе совет хĕрарăмĕсем пирĕн çĕршывăн экономикине малалла аталантарассишĕн пĕтĕм халăхăн социализмла ăмăртăвне активлă хутшăнаççĕ, социализмлă культурăна аталантарас ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешеççĕ, коммунизм строительствин ĕçне хăйсен вăй-хăвачĕсене пĕлĕвĕсене параççĕ.

Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те Коммунистсен партийĕпе Совет государстви пăхса ÿстернĕ хĕрарăмсен пысăк кадрĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă хĕрарăм-специалистсен йышĕ пирĕн çĕршывра, вăрçă умĕнхи 1940 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут ытла ÿснĕ, вĕсен йышĕ хальхи вăхăтра 830 пин çын ытла хисепленет. Аслă шкулсенче тата специальнăй вăтам шкулсенче хĕрарăмсемпе хĕрачасем миллион çын ытла вĕренеççĕ.

Промышленноçра, транспортра тата строительствăра миллионшар хĕрарăмсем — работницăсем, инженерсем, техниксем тата мастерсем ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн социализмлă ăмăртура хăйсен тĕслĕхне кăтартса ĕçлеççĕ, хăйсен техникăллă пĕлĕвĕсене тата производствăллă квалификацине ÿстереççĕ, малта пыракан техникăна тата производство культурине вĕренсе пыраççĕ.

Колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсенче ĕçлекен хĕрарăмсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ÿстерессишĕн кĕрешеççĕ, сутçанталăка урăхлатса çĕнетмелли сталинла плана пурнăçласа ĕçе активлă хутшăнаççĕ, агрономи пĕлĕвĕсене тата ялхуçалăх техникине вĕренсе пыраççĕ. Çĕршыври мĕнпур агрономсен хушшинче хĕрарăмсем 40 процент ытла, тракторсемпе комбайнсем çинче вуншар пин хĕрарăм ĕçлет, социализмлă çĕр ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен хушшинче хĕрарăмсем çĕршер пин çын шутланаççĕ.

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем совет наукипе культурине аталантарас тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлеççĕ. Совет Союзĕнчи наука учрежденийĕсенче, шкулсенче тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче икĕ миллион çурă ытла хĕрарăм ĕçлет. Университетсенче, институтсенче, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсенче вуншар пин хĕрарăм ĕçлет, вĕсем хăйсен çĕнĕ тĕпчев ĕçĕсемпе тата открытийĕсемпе совет наукине пуянлатаççĕ. Совет хĕрарăмĕсенчен нумайăшĕ литературăпа искусство енĕпе пултарулăх пулнине кăтартса параççĕ, пирĕн çынсене Тăван çĕршывшăн тăрăшса патриотла чаплă ĕçсем тума хавхалантаракан, идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра тăракан произведенисем çыраççĕ.

Халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас енĕпе совет хĕрарăмĕсем пысăк ĕçсем туса пыраççĕ. Совет Союзĕнчи пур ачасене те çичĕ çул вĕрентмелли йĕрке пурнăçа кĕрсе пырать, вунă çул вĕрентмелли—пĕтĕмĕшле пĕлÿ илмелли шкулсем, специальнăй вăтам шкулсемпе аслă шкулсем нумай ÿснĕ, государствăн пĕр-пĕр профессие ĕçлеме тата техникăна вĕренмелли шкулĕсене ÿснĕ. Миллион ытла хĕрарăм-учительсем пирĕн çамрăк ăрăва коммунистла ăнланулă çынсем пулма тата совет патриочĕсем пулма воспитани параççĕ. Халăх сывлăхне сыхлас енĕпе хĕрарăмсем миллион çын ытла ĕçлеççĕ. Пирĕн çĕршывра хĕрарăм-врачсен йышĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытла ÿснĕ, хальхи вăхăтра хĕрарăм-врачсем пĕтĕмпе 207 пин çын.

Социализмла Тăван çĕршыв Совет патриоткисем паттăр ĕçленине пысăка хурса хаклать. 70 хĕрарăма Совет Союзĕн Геройĕ ятне, 2.170 хĕрарăма Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне панă. 730 пин ытла хĕрарăма—работницăсене, колхозницăсене, инженерсене, агрономсене, халăха вĕрентес ĕç, халăх сывлăхне сыхлас ĕç работникĕсене тата культура работникĕсене СССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Наука, изобретательство, литература тата искусство енĕпе паллă ĕçсем тунăшăн 579 хĕрарăма Сталинла преми лауреачĕн ятне панă.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви хĕрарăмшăн — ача амăшĕшĕн тата ачасемшĕн пĕрмаях хытă тăрăшаççĕ. Ача амăшне пирĕн çĕршывра пĕтĕм халăх хисеплет. 35 пин хĕрарăма ытла «Ача-амăшĕ геройня» ятне панă, виçĕ миллион çурă хĕрарăма «Ача-амăшĕн мухтавĕ» орденĕпе тата «Ача-амăшĕн медалĕпе» наградăланă. Нумай ачаллă амăшĕсем, ачаллă пĕччен хĕрарăмсем тата тин çуралнă ачасем валли государство 1951 çулта кăна ултă миллиард тенкĕ пособи панă. Пионерсен сывлăха тĕреклетмелли лагерĕсем тата ачасен санаторийĕсем валли çулсеренех çĕршер миллион тенкĕ параççĕ. Халăх пурнăçĕ лайăхланса пынипе, государство халăх сывлăхне сыхлас тата ача амăшĕсемпе ачасене сыхласа усрас ĕçе лайăхлатассишĕн яланах тăрăшнипе Совет Союзĕнче ачасем вилесси нумай чакнă. Юлашки çулсем хушшинче халăх йышĕ кашни çулталăкра виçĕ миллион çын ытла хутшăнса пынă. Пирĕн çĕршывра сывлăх енчен çирĕп, шухăш енчен хаваслă çамрăк ăру, коммунизмăн çамрăк строителĕсем ÿссе çитĕнеççĕ. Пирĕн çамрăксемшĕн телейлĕ тата творчествăллă пурнăç патне пымалли пур çулсем те уçă.

ССР Союзĕнчи хĕрарăмсем государствăна тытса тăрас ĕçе тата совет строительствине анлă хутшăнаççĕ. 280 хĕрарăм СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем пулса тăраççĕ, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховнăй Совечĕсенче хĕрарăм-депутатсем 2.209 çын, ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсенче депутатсем пулса тăракан хĕрарăмсем çур миллион çын ытла. Халăх судьисемпе халăх заседателĕсем хушшинче хĕрарăмсем 40 процент ытла шутланаççĕ.

Совет Союзĕн аслă примерĕ халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсене хăйсен çĕнĕ пурнăçне тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарать. Китай хĕрарăмĕсем çĕршыв промышленноçĕпе ялхуçалăхне юсас тата демократиллĕ йĕркесем тăвас ĕçе тимлĕ хутшăнаççĕ. Хăйсен çĕршывĕнчи мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрле Польша, Чехословаки, Венгри, Румыни, Болгари, Албани, Монголи Халăх Республики хĕрарăмĕсем социализм тăваççĕ. Демократиллĕ Германи Республикинчи хĕрарăмсем пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ Германи тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенчи, колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи хĕрарăмсем Мартăн 8-мĕшĕ кунне капитал ĕççыннисен пурнăçĕ çине тата демократиллĕ прависем çине хытă тапăннă условисенче паллă тăваççĕ. Америкăпа Англи империалисчĕсем çĕнĕ вăрçа хатĕрленнипе халăхсене тата нумайрах çаратма, пысăк уссем илме усă кураççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче çар бюджечĕсене, халăхран пухакан налогсене тăтăш ÿстереççĕ, промышленность таварĕсемпе апат-çимĕççене хаклантарса пыраççĕ, мирлĕ пурнăçра кирлĕ япаласене тăвасси чакса пырать, çĕршер пин ĕççыннисем ĕçсĕр тăрса юлса, ĕçсĕррисен йышне хутшăнаççĕ. Ĕç хĕрарăмĕсемпе ачасен пурнăçĕ тата ытларах начарланса пырать. Пывăр ĕçлеттернĕрен, выçăпа тата чир-чĕрпе миллионшар хĕрарăмсемпе ачасем вилеççĕ.

Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕ çывăхарнă вăхăтра Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи лагерĕ хăйĕн речĕсене тата тачăрах пĕрлештерсе пырать, миршĕн кĕрешекенсен пĕтĕм тĕнчери фрончĕ ÿссе тата тĕреклене пырать. Пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тума чĕнсе калани çине 600 миллион çынна яхăн алă пусрĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕç хĕрарăмĕсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне миршĕн, çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç, Америкăпа Англи империалисчĕсем хатĕрлекен вăрçа хирĕç кĕрешессине вăйлатма чĕнекен лозунгсемпе ирттереççĕ. Мирпе демократишĕн кĕрешекенсен ретне хĕрарăмсем çĕнĕрен миллионшарăн та миллионшарăн хутшăнаççĕ. 64 çĕршыври 135 миллион хĕрарăма пĕрлештерсе тăракан Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ миршĕн, ĕç хĕрарăмĕсен экономикăпа политика тĕлĕшĕнчи прависемшĕн, пурнăçшăн тата ачасен пуласлăхĕшĕн яланах çине тăрса кĕрешсе пырать. Çав кĕрешĕве колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи хĕрарăмсем активлăрах та активлăрах хутшăнаççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче миллионшар хĕрарăмсем ĕç укçине ÿстерессишĕн, государствăн ĕçлеве хÿтĕлемелли тата социальнăй страховани йĕркине тăвассишĕн, государство халăха вĕрентес ĕç тата ачасен сывлăхне сыхлас ĕç валли паракан укçан хисепне ÿстерессишĕн кĕрешеççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕç хĕрарăмĕсем атомлă хĕçпăшала чарса лартма, хĕçпăшалсене чакарма, мире сыхламалли килĕшÿ тума ыйтаççĕ, Америка империализмĕн Корейăри юнлă агрессине хирĕç кĕрешеççĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен демократиллĕ юхăмĕнче Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсем малта пыраççĕ.

Совет хĕрарăмĕсен тивĕçĕ—мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсемпе интернационалла çыхăну тытассине анлă сарасси тата çав çыхăнăва тĕреклетесси, вĕсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, тĕнчери çĕнĕ вăрçа пуçарма хĕтĕртекен империалистсене хирĕç активлă кĕрешесси пулать.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин пур организацийĕсене те Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне—мартăн 8-мĕшĕ кунне совет хĕрарăмĕсен вăйне социализмлă экономикăпа культурăна çĕнĕ хăватпа ÿстерсе пырассишĕн кĕрешме мобилизацилес, хĕрарăмсене халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те 1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн кĕрешмелли пĕтĕм халăхăн социализмлă ăмăртăвне хутшăнтарас паллăпа ирттерме хушать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хĕрарăмсене — работницăсене, инженерсене, техниксене ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн тата тимлĕрех те хастарлăрах кĕрешме, пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн, чĕрт аварă, материалсене тата электричество энергине перекетлессишĕн кĕрешес ĕçре тата ытларах пуçарулă пулма, çĕнĕ техникăна тата малта пыракан ĕç меслечĕсене хăюллăнрах вĕренсе пыма чĕнет.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хĕрарăмсене—колхозницăсене, МТС-семпе совхоз работницисене, ялхуçалăх специалисчĕсене мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ÿстерес ĕçе пур майсемпе те аталантарса пырассишĕн, колхозпа совхоз производствинче агрономи наукипе малта пыракан опытри çитĕнÿсене анлă пурнăçласа пырассишĕн, колхозсен обществăллă хуçалăхĕсене малалла тĕреклетсе тата пур енĕпе те аталантарса пырассишĕн тимлĕ кĕрешме чĕнет.

Наукăпа культура енĕпе ĕçлекен хĕрарăмсен совет наукипе техникине çине тăрса малалла аталантарса пымалла, вĕсен хăйсен творчествăллă вăйĕсемпе пултарулăхĕсене социализмлă культурăна, литературăпа искусствăна, халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçсене малалла вăйлатса пыма парас пулать.

Пирĕн çĕршывра коммунизм обществи тăвас интерессем парти организацийĕсене промышленноçри, транспортри, ялхуçалăхĕнчи обществăшăн усăллă ĕçе хĕрарăмсене малашне ытларах хутшăнтарса пыма, обществăллă-политикăллă пурнăçа, государство ĕçĕн, хуçалăхăн тата культурăн пур облаçĕсенче те хĕрарăмсен активлăхне малалла ÿстерсе пыма хушаççĕ. Парти организацийĕсен хĕрарăмсене политикăллă воспитани парас ĕçе вăйлатас пулать, вĕсен культурăпа техника пĕлĕвĕсен шайне, вĕсен политикăллă тата производствăллă активлăхне ÿстерсе пырассишĕн пĕрмаях тăрăшмалла. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсене хĕрарăм кадрĕсене уйăрса лартма лайăх майсем пулса тăнипе туллин усă курма, малта пыракан хĕрарăмсене парти, совет, хуçалăх, профсоюз тата комсомол органĕсенчи ертсе пыракан ĕçсене, халăх хуçалăхĕпе культурăн мĕнпур отраслĕсенчи ертсе пыракан ĕçсене хăюллăн уйăрса лартма хушать.

Парти, профсоюз, комсомол организацийĕсен, советпа хуçалăх органĕсен ĕççынни хĕрарăмĕсен ĕçне йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшса ĕçлемелле, ача амăшĕсене хăйсен ачисене вĕрентсе ÿстерме яланах пулăшса пымалла, ача учрежденийĕсемпе сывлăх учрежденийĕсен, обществăллă столовăйсен, кĕпе-тумтир çĕлекен мастерскойсен, прачечнăйсен, куллен кирлĕ ĕçсене тăвакан ытти предприятисен, хĕрарăмсен килти ĕçне çăмăллатма пулăшакан предприятисен шутне нумайлатассишĕн тата вĕсен ĕçĕсене лайăхлатассишĕн тăрăшмалла.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕç хĕрарăмĕсене Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ — мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе саламлать, совет хĕрарăмĕсем малашне те коммунизм строительствин пур участокĕсенче те хăйсен творчествăллă активлăхне ÿстерсе пырассине, малашне те пирĕн аслă Советлă социализмлă Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетессишĕн паттăррăн кĕрешсе пырассине çирĕп шанса тăрать.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

Н. В. Гоголь памятникне лартнă ятпа Мускавра пулнă чаплă пуху

Совет Союзĕнчи халăхсем, пĕтĕм тĕнчери прогрессивнăй шухăшлă мĕнпур çынсем вырăссен аслă писательне Николай Васильевич Гоголе хисеплесе асăнаççĕ.

Мартăн 2-мĕшĕнче Мускавра Н. В. Гоголь памятникне уçнă ятпа чаплă пуху пулнă. Памятник лартнă ятпа пулнă чаплă пухура темиçе пин çын пулнă. Уяв чухнехи пек илемлетнĕ Арбат площадьне тата унăн çывăхĕнчи урамсене столицăри ĕççыннисем, ученăйсен, писательсен, аслă шкулсенчи студентсемпе вăтам шкулсенче вĕренекенсен делегацийĕсем, обществăллă организацисен представителĕсем нумай пухăннă. Унта ют çĕршывсенчен çак чаплă уява ирттерме килнĕ культура деятелĕсем пулнă.

Кăнтăрла 3 сехет. Н. В. Гоголь вилнĕренпе çĕр çул тултарнине уявласипе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри комитетăн председателĕ Н. С. Тихонов вырăссен аслă писательне хисеплесе асăнмалли митинга уçать. Оркестр Совет Союзĕн государство гимнĕн кĕввине вылять.

Н. С. Тихонов аслă писатель Н. В. Гоголь çырнă произведенисен вилĕмсĕр вăй-хăвачĕ çинчен каласа парать. Н. В. Гоголь хăйĕн кĕнекисене вырăссен илемлĕ сăнласа кăтартмалли чĕлхипе çырни, пурнăçри чăнлăха тĕрĕс сăнласа кăтартни, çынна юратса, халăхăн творчествăллă вăйĕсене ĕненсе, Тăван çĕршывăн малашнехи ырă пуласлăхне ĕненсе çырнă. Унăн кĕнекисем пĕтĕм этемлĕхĕн пысăк пуянлăхĕ пулса тăчĕç.

Вырăссен аслă писателĕ ĕмĕтленнĕ вăхăт çитрĕ. Ленинпа Сталинăн аслă идейисем çутатса тăракан совет халăхĕ ĕлĕк лăпкă выртнă анлă вырăнсенче тулли пурнăç туса хучĕ, çав вырăнсене питĕ çÿлĕ пусăма çĕклерĕ, Тăван çĕршыва урăхлатса çĕнетрĕ.

— Гоголь хыççăн вăл пуçланă ĕçе малалла туса пыракан хăватлă писательсем тупăнчĕç,— тет юлашкинчен Н. С. Тихонов.— Совет халăхĕ хушшинчен тухнă, социализмлă обществăра ÿссе çитĕннĕ халăх таланчĕсем, писательсем мухтавлă тапхăра, аслă Сталин ятне панă тапхăра тивĕçлĕ çĕнĕ произведенисем çыраççĕ.

Н. С. Тихонов СССР Министрĕсен Совечĕ ячĕпе вырăссен аслă писателĕн Н. В. Гоголĕн памятникне уçать. Пухăва пынисем умне Н. В. Гоголе сăнласа ÿкернĕ пысăк скульптура тухса тăрать, ăна Сталинла преми лауреачĕ Н. В. Томский туса хатĕрленĕ.

Постамент çине ылтăн саспаллисемпе çапла çырнă:

«АСЛĂ ВЫРĂС САМАХ ХУДОЖНИКНЕ НИКОЛАЙ ВАСИЛЬЕВИЧ ГОГОЛЕ СОВЕТ СОЮЗĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЧЕН

1952 çулхи мартăн 2-мĕшĕ».

Писателе пĕтĕм кĕлеткипех ÿкернĕ. Вăл çарапуç, сулахай аллинче кĕнеке тытса тăрать. Гоголь малалла пăхать, вăл Российăн малашнехи чаплă пуласлăхне курса тăпă пек туйăнать.

Площадьри тĕрлĕ вырăнсенчен Гоголь ячĕпе тăракан бульвара, памятник патне çынсем пысăк илемлĕ чечексен çыххисене илсе пыраççĕ. Темиçе минут хушшинче памятник тавра пур çĕрте те чĕрĕ чечексен çыххисене хурса тухаççĕ.

СССР Совет писателĕсен союзĕ ячĕпе Л. Леонов, Украина Совет писателĕсен союзĕ тата УССР Наука академийĕ ячĕпе А. Корнейчук сăмах калаççĕ. Вĕсем илемлĕ сăмахăн хавхаланулă художникĕ—Н. В. Гоголь ĕмĕр-ĕмĕр мухтаса ырлама тивĕçлĕ çын пулни, вăл Тăван çĕршыва хытă юратни çинчен калаççĕ.

Митинг хупăнать. Мускаври нумай çынсем вырăссен аслă писателĕн памятникĕ умĕнчен ăна тулли кăмălпа хисеплесе иртеççĕ. (ТАСС).

Февралĕн 15-мĕшĕ | **Вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх** | Мартăн 15-мĕшĕ

Панă сăмаха чыслăн пурнăçлар

Йĕпрес районĕнчи «Путиловка» колхоз членĕсем уйăхлăха активлă хутшăнчĕç. Вĕсен ĕç тухăçлăхĕ чылай ÿсрĕ. Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли тата каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана тултарчĕ. Сталин ячĕпе тăракан, «Искра», Киров ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем те вăрманта паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Асăннă колхозсен руководителĕсем тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсем йывăç хатĕрлекен колхозниксене хăйсем ертсе пыраççĕ, тухăçлă ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Малта пыракан колхозсен опычĕ çакна кăтартать: кашни колхоз государство заданине, йышăннă обязательствăна вăхăтра тултарма пултарать. Колхозниксене Тăван çĕршыва йывăç мĕн тери кирли çинчен лайăх ăнлантарса пани, ĕçе тĕрĕс йĕркелени çеç кирлĕ. Анчах районти хăшпĕр ял Совечĕсемпе колхоз руководителĕсем государство заданине тултарассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ. Çавăнпа та район йывăç турттарас тĕлĕшпе юлса пырать. Районăн тата сакăр пин кубометра яхăн йывăç турттарса кăлармалла. Февралĕн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче колхозсем куллен вăтам шутпа 60 кубометра яхăн йывăç турттарса кăларнă. Малашне те çавăн пек хăвăртлăхпа ĕçлес пулсан, сезонти плана тултарма тата тăватă уйăх ытла кирлĕ пулĕччĕ.

Йышăннă обязательствăна срокра тултарас тесен, районăн куллен 200 лавпа йывăç турттармалла. Халĕ лашапа йывăç турттаракансем сахал. Чылай колхозсем уйăхлăха япăх хутшăннă. Хăшпĕр колхозсем малтанхи кунсенче аван ĕçлерĕç, юлашки вăхăтра ĕçе вăйсăрлатрĕç. Димитров ячĕпе тăракан, «Красный партизан» колхозсем уйăхлăхăн малтанхи эрнинче вăрманта пачах ĕçлемерĕç. Юлашки кунсенче те вĕсем тимлĕ ĕçлемеççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн 1.600 кубометр йывăç турттарса кăлармалла. Февралĕн 27-мĕшĕ тĕлне вăл пурĕ те 140 кубометр çеç турттарса кăларнă. «Правда», Молотов ячĕпе тăракан тата «Заря» колхозсем йывăç турттарса кăлармалли плана 10 процентран та каярах тултарнă.

Йĕпрес райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсене тата пуçламăш парторганизацисене пулăшмаççĕ теме çук. Вăрманта агиткультбригада, пропагандистсемпе докладчиксем, пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем чылайăшĕ ĕçлеççĕ. Апла пулин те районта массăллă-агитациллĕ ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Хăшпĕр ял Совечĕсемпе колхоз руководителĕсем вĕсемшĕн плана малта пыракан колхозсем тултарасса шанса лараççĕ. Районти организацисенче отчет тунă чухне е канашлусенче вĕсем «ыранах тивĕçлĕ мера йышăнатпăр, массăллăн тухса кайса плана пĕрикĕ эрнере тултаратпăр» тесе шантарса пурăнчĕç. Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ çавăн пек руководительсен йăнăшне çийĕнчех тÿрлетмерĕç, вĕсен ответлăхне ÿстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмарĕç.

Л. РУМЯНОВ.

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ МАРТĂН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрлевĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă	РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрлевĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	81,5	85,1	64,7	Первомайски	86,7	74,7	82,8
Элĕк	79,3	73,2	55,2	Пăрачкав	94,2	102,1	101,2
Вăрнар	89,4	71,6	85,8	Советски	65,9	—	68,9
Йĕпреç	90,2	85,0	53,4	Сĕнтĕр	99,4	36,2	81,0
Ишлей	61,4	—	34,0	Вăрмар	64,6	95,1	34,6
Канаш	86,1	84,8	79,5	Çĕрпÿ	68,6	83,7	63,1
Калинино	88,9	70,6	86,6	Шупашкар	92,8	97,1	45,7
Куславкка	86,3	96,7	82,0	Чкаловски	102,5	92,2	82,5
Комсомольски	71,6	100,2	95,0	Чурачăк	82,7	74,9	47,2
Красноармейски	68,2	29,1	60,7	Шăмăршă	76,0	68,0	70,4
Хĕрлĕ Чутай	85,2	64,6	—	Шăхасан	82,1	91,1	53,0
Кувакино	68,4	83,2	43,3	Çĕмĕрле	115,1	101,5	100,0
Сĕнтĕрвăрри	76,2	69,4	44,4	Етĕрне	76,2	97,6	60,8
Муркаш	108,0	110,1	—	Елчĕк	46,7	78,3	62,3
Октябрьски	60,4	86,8	70,9	Тăвай	64,8	108,2	54,5

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ çĕрте

Тури Юнтапари «Канаш» колхоз общественнăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Халĕ колхоз планпа пăхнинчен чылай ытларах выльăх-чĕрлĕх усрать. Колхозăн чăхчĕпсем пин çурă ытла. Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш ӳссе пырать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси ăнăçлă пулса пыни колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пынинчен нумай килет. Колхозри парторганизаци ертсе пынипе, кунта фермăри работниксем хушшинче кашни икĕ эрнере пĕрре производствăллă канашлусем иртереççĕ. Çав канашлусенче ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене тĕплĕ тишкерсе тухса сӳтсе яваççĕ, лайăх ĕçлекенсен опычĕсене палăртаççĕ, малашнехи ĕçсен планĕсене çирĕплетеççĕ. Канашлусенче колхозниксем активлă тухса калаçаççĕ, пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартаççĕ, социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсем мĕнле пурнăçланса пынине пăхса тухаççĕ. Çакăн пек канашлусем кăçал кунта тăватă пулнă.

Парторганизаци фермăра ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыма агитаторсем çирĕплетнĕ. Вĕсенчен уйрăмах С. Алексеев, М. Антонов юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем фермăра ĕçлекенсене кашни кунах хаçат-журналсем вуласа пăраççĕ, Тăван çĕршыв пурнăçĕпе тата тĕнчери лару-тăрупа паллаштараççĕ. Колхоз правленийĕ ферма работникĕсем валли ятарласах «Чăваш Коммуни», районти «Коммунизмшăн» хаçатсем тата «Кормовое производство» журнал çырăнса панă.

Кунсăр пуçне кашни эрнере пĕрре е иккĕ политинформаци иртереççĕ, унта колхозниксене кулленхи политика ыйтăвĕсемпе паллаштараççĕ. Агитаторсем час-часах тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем иртереççĕ. Кăçал «Совет Союзĕ — мир, демократи тата социализм тĕрекĕ», «Ĕç резервĕсемпе туллин усă курни—кашни колхоза хуçалăх ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем кӳрекен никĕс», «Фермăсенче çамрăк выльăхсене йышăнас тата вĕсене пăхса ӳсрес ĕçе тĕрĕс организацилесси», «Выльăх апатне упрани тата унпа тĕрĕс усă курни—колхозсенче выльăха лайăх хĕл каçарма кирлĕ условисем» темăсем тăрăх калаçусем иртернĕ. Çакăн пек калаçусене агитаторсем яланах умра тăракан ĕçсемпе çыхăнтарса пыраççĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе куллен сарса пыни колхозниксене выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне малалла ӳстерсе пырассишĕн кĕрешме хавхалантарать. Вĕсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту мĕнле пыни çинчен фермăра тухса тăракан боевой листокра тăтăшах çутатаççĕ. Боевой листок фермăри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе те пысăк пулăшу парать.

Фермăра ĕçлекенсем хăйсен пĕлĕвĕсемпе ĕçри опычĕсене куллен ӳстерсе пыма тăрăшаççĕ. Зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курса зоотехник Васильева юлташ ертсе пырать. Курсра 13 çын вĕренет. Кăçал 14 занятии пулнă. Вĕренӳре уйрăмах Е. Сергеева тата М. Матвеева юлташсем лайăх ăлкĕрсе пыраççĕ. Вĕсем хăйсем вĕреннине кулленхи ĕçпе çыхăнтараççĕ.

Евдокия Иванова фермăра 1932 çултанпа ĕçлет. Вăл 8 сысна ами пăхать. Иртнĕ çулта, планпа пăхнă тăрăх, унăн кашни амаран 14-шар çура илмелле пулсан, вăл 17-шер çура, çапла вара 8 амаран 128 çура илсе пăхса ӳстернĕ. Пĕлтĕр ăна, ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе, 9 сысна çури панă, унăн примерĕпе фермăри М. Матвеева, Е. Сергеева, А. Сергеева юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ, сыснасене зоотехникăпа ветеринари правилисем кăтартнă пек пăхаççĕ.

Фермăри тепĕр работница—Василиса Ефимова—64 сурăх пăхать. План тăрăх унăн 71 путек илмелле пулсан, вăл 75 путек илсе, пурне те сывă пăхса ӳстернĕ.

Кăçал фермăра ĕçлекенсем çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кашни 100 сурăх пуçне 110 путек тата кашни сурăхран 3-шер килограмм çăм касса илме, кашни амаран 15-шер сысна çури, кашни ĕнерен пĕрер пăру тата пиншер литр сĕт суса илме сăмах пачĕç. Панă сăмаха мĕнле пурнăçласа пынине халĕ çакăнтан та курма пулать: сысна ферминче ĕçлекенсем. сăмахран, январь уйăхĕнче 2 амаран 30 сысна çури илчĕç, сурăх пăхакан В. Ефимова 32 сурăхран 38 путек илчĕ. Çамрăк выльăхсем пурте тĕреклĕ те сывă çитĕнеççĕ. Фермăра ĕçлекенсем тăрăшнине пула, çамрăк выльăхсене çитермелли апатсене малтанах çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă. Халĕ вĕсене тирпейлĕ тыткалаççĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерсе пырас ĕçе пĕтĕм колхоз членĕсем хутшăнаççĕ. Колхозра саман кирпĕч тăвас ĕç çулран-çул сарăлса пырать. Иртнĕ çулта кунта 75 сурăх, 60 ĕне, 500 чăх-чĕп вырнаçмалăх витесем туса лартнă. Кăçал тата 50 ĕне, 35 сысна хупмалăх çĕнĕ, стандартлă витесем тăваççĕ.

Колхоз правленийĕ (председателĕ П. Львов юлташ) выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри кадрсене куллен пулăшса, вĕрентсе пырать. Фермăсенче ĕç дисциплинине лайăх йĕркеленĕ, унта пур ĕçе те вăхăтра туса пыраççĕ.

С. ФЕДОРОВ.

Ялхуçалăх новаторĕсен опытне сарасси

ВКП(б) Вăрмар райкомĕн бюровĕ ялхуçалăх новаторĕсен опытне сарас ĕç районта мĕнле пулса пыни çинчен сӳтсе яврĕ.

Районти ялхуçалăх пайĕ тата унăн пропагандăпа енĕпе ĕçлекен ушкăнĕ (руководителĕ И. Сапаркин юлташ) ялхуçалăх новаторĕсен опытне колхозниксем хушшинче сарса пымаççĕ Ку тĕлĕшпе ялхуçалăх пайĕн план та çук. Агрономсене, зоотехникăпа ветеринари работникĕсене мичуринла агробиологи наукине пропагандăлас ĕçе хутшăнтарман.

Нумай колхозсенче агрозоотехника курсĕсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Ялхуçалăх пайĕн главнăй зоотехникĕ Сергеева, ветеринари врачĕ Иванов юлташсем, МТС-ăн главнăй агрономĕ Лукина юлташ «Дружба», «Гигант», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенчи курссенче пĕрер занятие кăна иртернĕ.

Райком бюровĕ ялхуçалăх новаторĕсен опытне сарассине вăйлатма тата агрозоотехника курсĕсен ĕçне лайăхлатма конкретлă решени йышăнчĕ. Çитес кунсенче ялхуçалăх специалисчĕсен районти канашлăвĕ пулмалла. Пуçламăш парторганизацисен черетлĕ пухăвĕсенче ялхуçалăх наукине пропагандăлас тата новаторсен опытне сарас ĕçсене лайăхрах йĕркелесси çинчен сӳтсе яваççĕ.

Уй-хире удобрени кăларас ĕçе татăклă вăйлатар!

*

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕМ УЙ-ХИРЕ УДОБРЕНИ КĂЛАРМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

1952 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Уя кăларнă: тислĕк	торф	РАЙОНСЕМ	Уя кăларнă: тислĕк	торф
1. Вăрнар	28,0	74,0	16. Куславкка	16,3	7,9
2. Çĕрпӳ	27,3	96,0	17. Ишлей	16,3	—
3. Муркаш	25,0	6,3	18. Первомайски	16,0	18,3
4. Елчĕк	24,5	—	19. Сĕнтĕрвăрри	15,9	3,3
5. Улатăр	23,2	—	20. Канаш	14,4	23,9
6. Октябрьски	22,1	5,2	21. Советски	14,3	3,6
7. Шăхасан	22,0	47,2	22. Элĕк	14,3	0,4
8. Сĕнтĕр	19,7	2,8	23. Комсомольски	12,9	—
9. Калинино	19,3	59,4	24. Çĕмĕрле	11,9	3,8
10. Чкаловски	18,4	35,6	25. Кувакино	10,0	—
11. Красноармейски	18,1	43,8	26. Вăрмар	10,0	—
12. Чурачăк	17,9	5,4	27. Хĕрлĕ Чутай	7,3	0,6
13. Йĕпреç	17,0	37,7	28. Пăрачкав	6,6	—
14. Тăвай	16,8	1,4	29. Шупашкар	6,6	—
15. Етĕрне	16,7	13,0	30. Шăмăршă	1,4	14,6

* * *

Партипе правительство пирĕн республикăри ялхуçалăхĕ умне пысăк задача—çитес ик-виçĕ çул хушшинче колхозсенче мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне нумай ӳстерес задача лартрĕç. Çакна пурнăçлас тесен, чи малтанах çĕрĕç культурине ӳстермелле, ялхуçалăх ĕçĕсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх сроксенче туса иртермелле, тăпрана ăшăх сухаламалла мар, вырăнти тата минераллă удобренисемпе анлă усă курмалла.

Удобренисемпе, уйрăмах вырăнти удобренисемпе—тислĕкпе, торфпа усă курмасăр вăйлă тырпул туса илесси çинчен калаçмалли те çук. Республикăри малта пыракан колхозсем вырăнти тата минераллă удобренисемпе анлă усă курнине пула, пысăк тухăçлă тырпул пухса кĕртеççĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» тата ытти колхозсем те тăпран сухаламалли сийне тарăнлатнипе пĕрлех вырăнти органически удобренисем нумай кăлараççĕ. Çавсем тата Вăрнарпа Çĕрпӳ районĕсенчи малта пыракан ытти колхозсем кăçал хĕлле уя вуншар пин лав тислĕк, торф кăларнă, çĕршер центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра, сăмахран, кăçал хĕл ларнăранпах мĕнпур туртăм вăйĕнчен 20 проценчĕпе куллен тислĕк тата торф турттараççĕ.

Анчах та Ялхуçалăх министерствин паян пичетленекен сводкинчен çакă курăнать: вырăнти удобренисем кăларас ĕç çине пур çĕрте те тимлĕ пăхмаççĕ-ха. Сăмахран, Шăмăршă районĕнчи мĕнпур колхозсем икĕ уйăх хушшинче хире 2.540 тонна тислĕк тата 1.022 тонна торф çеç кăларнă. Ку вăл Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз хăй пĕччен кăларнинчен те темиçе хут сахалтарах. ВКП(б) райком секретарĕ Дубов, райисполком председателĕ Георгиев, районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Алексеев юлташсем тырпул çинчен нумай калаççĕ, анчах та вăйлă тырпул туса илме чăннипе нимĕнле мера та йышăнмаççĕ.

Шупашкар районĕнче те ĕç çавăн пекех. Районти колхозсем уя пĕр лав торф та кăларман-ха, тислĕке 17 пин лав кăна кăларнă. ВКП(б) райком секретарĕ Никитин, райисполком председателĕ Александров тата районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Федоров юлташсем ертсе пыракан колхозсенче удобренисем уя кăларас ĕçе организацилес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Вырăнти удобренисем хатĕрлесе уя кăларас тĕлĕшпе çавăн пекех Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Кувакино районĕсенчи нумай колхозсем питĕ япăх ĕçлеççĕ. Çак районсен руководителĕсен удобренисене хатĕрлесе уя кăларас ĕçе кашни колхозрах организацилеме вăхăт ĕнтĕ. Тырпул тухăçлăхне ӳстересси çинчен темĕн чухлĕ калаçсан та, решенисем йышăнсан та, çапах та уя тислĕкпе торф кăлармасăр колхозсенче вăйлă тырпул туса илме май çук.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем, вĕсемпе пĕрлех район руководителĕсем те вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç япăх пынине лашасем вăрмантă ĕçлеççĕ тесе ăнлантарма пăхаççĕ. Çак «сăлтава» пачах ĕненме çук, ăна хăшпĕр колхоз руководителĕсен тата ялхуçалăх органĕсен работникĕсен пуçарусăрлăхне витсе хăварма анчах тупса кăларнă. Республикăра пĕр колхозра та мĕнпур лашасемпе вăкăрсене вăрман хатĕрленĕ çĕре яман. Халĕ, уйăхлăх пынă вăхăтра та, колхозсенче туртăм вăйĕ чылай юлнă, лашасемпе вăкăрсене кӳлмеççĕ.

Районсенче вырăнти удобренисем хатĕрлесе уя кăларас ĕç çине тимлĕ пăхманнипе—йăнăш туни пулать, ăна хăвăртрах тӳрлетмелле. ВКП(б) райкомĕсемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем уя удобренисем кăларас ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăма, кашни колхозрах хĕллехи вăхăтра торфпа тислĕк хатĕрлесе уя кăлармалли плана тултармалла тума тивĕçлĕ.

Колхозран пĕлтерессĕ

КАЛИНИНО. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн паха опычĕпе паллашнă хыççăн, «Трактор» колхоз членĕсем кăçал вырăнти тата минераллă удобренисем пĕлтĕрхинчен ытларах хатĕрлеме пулчĕç. Колхозниксем хăйсен сăмахне пурнăçлаççĕ. Хире темиçе пин лав тислĕкпе торф кăларнă, 300 центнер ытла минераллă удобренисем кӳрсе килнĕ. Уй-хир бригадисем çуракине лайăх хатĕрленсе çитессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

И. ЕФРОСЬЕВ.

Совет Правительстви США Правительствине панă нота

Февралĕн 25-мĕшĕнче США Государство департаменчĕ Совет Союзĕн США-ри Посолĕ Панюшкин патне Р. Мэдден çырăвне (ун çумне Конгресăн представительсен палати 1951 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă резолюцие хурса) ярса панă. Р. Мэдден—палата «Катыньри ĕçе» тĕрĕслеме тесе уйăрнă комиссин председателĕ. Мэдден хăйĕн çырăвĕнче гитлерла преступниксем 1941 çулта Катынь вăрманĕнче вĕлернĕ Польшăн тыткăнри офицерĕсем пирки, вĕсене мĕнле вĕлерни çинчен Совет Правительствинчен темĕнле «çирĕплетсе каланисем» илесшĕн пулни çинчен çырать.

Февралĕн 29-мĕшĕнче СССР Посольстви США государство департаментне çак пирки çакăн пек нота ярса панă:

«Çакăнпа пĕрле Посольство Мэдденăн Государство департаменчĕ ярса панă çырăвне тата ун çумне хурса янă резолюцие, представительсен палатин 1951 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнчи резолюципе каялла тавăрать, çавсене тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче йышăннă йĕркесене пăсса тата Совет Союзне кӳрентерсе çырнă, тесе шутлать.

Посольство çаксене аса илтерет:

1. Катыньри преступлени çинчен калакан ыйтăва 1944 çултах официальнăй Комисси йĕрлесе тĕпченĕ, çавăн чухнех Катыньри ĕç вăл гитлерла преступниксен ĕçĕ пулнине палăртнă, кун çинчен пĕлтернине 1944 çулхи январĕн 26-мĕшĕнчи хаçатсем çинче пичетлесе кăларнă;

2. Комисси çав заключенине хирĕç США правительстви 8 çул хушшинче, юлашки вăхăтчченех, нимĕн те каламан.

Çаксене шута илсе, Посольство çапла калама кирлĕ тесе шутлать: Катыньри преступлени пирки официальнăй Комисси хăйĕн заключенине тунăранпа 8 çул иртнĕ хыççăн çак ыйтăва çĕнĕрен хускатни вăл Совет Союзĕ çинчен элек сарас, çапла майпа гитлерла çар преступникĕсене (вĕсем айăплă пулнине пурте йышăннă) тӳрре кăларас тĕллевпе пуçарнă ĕç пулса тăрать.

Çакăнпа пĕрле официальнăй «Комисси Катыньри преступлени çинчен пĕлтернине, çулте асăннă пĕлтерĕве, ярса паратпăр».

Нотăпа пĕрле «Нимĕççĕн фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче персе вĕлернине тĕпчесе пĕлме ятарласа тунă Комисси пĕлтернине», ятарласа тунă Комисси председателĕ Н. Н. Бурденко академик, ятарласа тунă комиссии членĕсем: Алексей Толстой академик, Николай митрополит, В. П. Потемкин академик, А. С. Гундоров генерал-лейтенант тата ыттисем те алă пуснăскере, ярса панă. Ятарласа тунă Комиссин çав пĕлтерĕвĕ Совет Союзĕнчи хаçатсенче 1944 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче пичетленсе тухнă.

Шупашкар пристанĕ çитес навигацие хатĕрленет

Шупашкар пристанĕн флочĕ тăракан затонра халĕ иртен пуçласа каçчен хĕрӳ ĕç вĕрет. Кунта суднăсене çитес навигацие срокчен хатĕрлесе çитерессишĕн кĕрешӳ пырать.

Пристань коллективĕн кăçал 19 суднăна юсаса ĕçе ямалла, вĕсенчен икĕ суднăна тĕпрен юсаса çĕнетмелле. Стахановла ăмăртса ĕçлесе, коллектив мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 11 суднăна пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтерсе, навигацие хатĕрлесе çитернĕ. Ытти суднăсене март уйăхĕнче, графикпа кăтартнинчен икĕ эрне маларах юсаса пĕтерсе ĕçе яраççĕ.

Командăсем хушшинче суднăсене лайăх пăхса усрама социализмлă обязательствăсем илесси анлă сарăлнă. Халĕ В. Новиков, А. Исачкин, Н. Федоров, Н. Семяхин тата А. Стремин шкиперсем хăйсен суднисене социализмла пăхса усрама йышăннă. «Чебоксарец», «Ударник Потапов», «Коммунальник» катерсем çинче юлашки ĕçсем пыраççĕ. Вĕсене пурне те мартăн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех ĕçе хатĕрлесе çитереççĕ.

Атăл урлă çӳрекен «20 лет ЧАССР» пăрахут халĕ Куйбышеври затонра. Вăл халиччен çĕр кăмрăкĕпе ĕçленĕ пулсан, кăçалтан пуçласа ăна шĕвек топливăпа ĕçлекен тăваççĕ, сăрласа илемлетеççĕ. Атăл урлă каçармалли пристань дебаркадерне пысăклатса лайăхлатаççĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи суднăсем çӳремелли канал ĕçе кĕнĕ май, çĕнĕ линипе пăрахутсем çӳреме тытăнаççĕ. Çав линисенчен пĕри Мускав—Дон çинчи Ростов пулать. Мускавран Ростова каякан çĕнĕ те илемлĕ пăрахутсем Шупашкар пристанĕнче чарăнса тăраççĕ. Çавна май пассажирсем ăсатасси те, грузсем илсе çӳресси те пĕлтĕрхинчен чылай ӳсмелле.

Çитес навигацие хатĕрленсе, Шупашкар пристанĕн дебаркадерне нумай çĕнетсе лайăхлатаççĕ. Унта вăхăтлăха чарăнса тăракансене канма уйрăм каютăсем пулаççĕ. Пассажирсем лармалли зала çĕнĕ сĕтел-пукансем, креслăсем, дивансем лартаççĕ, террасăсем тăваççĕ, киввисене юсаса çĕнетеççĕ. Дебаркадера сутă кăвак тĕслĕ сăрпа сăрламалла.

Кăçал пристань территорине йĕркелесе илемлетес тĕлĕшпе те чылай пысăк ĕçсем тума пăхнă. Пристань территорийĕ тавра карта тытса тухаççĕ. Грузсем пушатмалли, тавар сутмалли вырăнсем пулаççĕ. Кунта пилĕк ларек ĕçлемелле. Дебаркадер çине пырса кĕмелли вырăнта чечек йăранĕсем тума пăхнă.

Пристань территорийĕнче тата дебаркадер çинче темиçе радиоточка пулмалла. Пăрахутсем хăçан çитессине, кунта миçе минут тăрассине тата хăш вăхăтра каяссине радиопа пĕлтерсе тăраççĕ.

Навигаци пуçлансанах Шупашкарпа Хусан хушшинче те пăрахутсем çӳремелле пулать. Çав линипе çӳреме «Колхозница» тата «Красное знамя» катерсене çирĕплетнĕ. Каяраххăпа Ильинкăпа Сĕнтĕрвăрри хушшинче те ятарласа катерсем çӳремелле.

Хулари строительство ĕçĕсене ытларах пулăшас тата грузсем турттармалли плана иртерсе тултарас майпа, кăçалхи навигаци вăхăтĕнче пристань коллективĕ Атăл леш енчен хăйăр турттарма тытăнать. Çак ĕçе кунта пĕтĕмпех механизацилеççĕ. Хăйăра хăватлă автокрансемпе тиесе пушатаççĕ. Çапла вара çу каçиччен 50 пин тонна ытла хăйăр турттармалла.

Шупашкар пристанĕн коллективĕ çитес навигацие нихçанхинчен лайăх хатĕрленсе кĕтсе илсе, навигаци планне срокчен тата иртерсе тултарассишĕн кĕрешет.

Матвеев пропагандистăн пĕр занятийĕ

Матвеев юлташ ертсе пыракан кружокра вĕренекенсем пурте Çĕмĕрле хулинчи хатĕрлев организацийĕсенче ĕçлекенсем. Ку организацисем хула талккипе сапаланнă. Апла пулин те кружок членĕсем—пункт заведующийĕсем, бухгалтерсем, агентсем занятие яланах йĕркеллĕ çӳреççĕ: кружок хăйĕн занятине иртермесĕр пĕрре те пулман.

Кружокра пурĕ 13 çын. Улттăшĕ парти ретĕнче тăраççĕ. Кружок членĕсенчен виççĕшĕ вăтам шкул пĕтернĕ; пĕри 9 çул, виççĕшĕ 8 çул вĕреннĕ, ыттисем вара тата сахалтарах вĕреннĕ.

Кружок паян 22-мĕш занятие иртерет. Тема—«Большевиксен партийĕ Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи тапхăрĕнче». Паянхи занятие—ку темăпа иртекен иккĕмĕш занятие. Иртнĕ занятире кружок членĕсем Отечественнăй вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче тата активлă оборона тытса пынă вăхăтра тăшмана хирĕç наступлени пуçарма хатĕрленмелли сталинла плана пурнăçлани çинчен пропагандист каласа панине итленĕ. Занятие—иртнĕ занятире вĕреннине аса илнинчен пуçланать. Итлекенсене асăрхаттарма та кирлĕ мар: вĕсем занятие йĕркине икĕ çул хушшинче лайăх хăнăхса çитнĕ.

Пропагандист пĕррмĕш ыйту парать: «Сталин юлташ Аслă Отечественнăй вăрçăн тĕллевĕ çинчен мĕн вĕрентнине каласа парăр. Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх калани тата унăн историллĕ пĕлтерĕшĕ».

Кружок членĕсем шухăшлаççĕ. Мĕншĕн тесен икĕ вăрăм сĕтел хушшине ларса тухнă юлташсенчен кашниех е хĕçпăшалпа—çапăçу хирĕнче çапăçнă, е ĕçпе—кунта, тылра фронта пулăшса тăнă. Нумай пулмасть пулса иртнĕ ĕçсем, аслă çулпуç сăмахĕсене вуланă май, кашнин асĕнче паянхи пек килсе тухаççĕ. Кружок членĕ, взвод командирĕ пулнă В. Муров юлташ Мускав патĕнче, Ленинград сывăхĕнче, Волхов таврашĕнче çапăçнă, унтан Вена, Будапешт, Прага хулисене ирĕке кăларнă çĕрте пулнă. Гварди ефрейторĕ Н. Бендин юлташ Сталинград патĕнчен Германи чиккине çитет, А. Тарасов тата П. Матвеев юлташсем Мускава сыхланă. Хĕвелтухăç Пруссири çапăçусенче пулнă, рота командирĕ А Краденов юлташ Мускав патĕнче çапăçнă.

Пĕр-ик самант иртсен, П. Матвеев юлташ: кам хатĕр,—тесе ыйтать. Тăватă-пиллĕк çын алă çĕклеççĕ. Вырăнтан А. Краденов юлташ тăрать. Вăл—«Заготлен» кантурĕнчи бухгалтер. Унăн кăкри çинче Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш степеньлĕ орденĕ çутăлса тăрать.

А. Краденов юлташ фашистла Германи тапăннипе пирĕн çĕршывра пулса тăнă лару-тăру çинчен, мирлĕ пурнăç вăхăчĕ иртсе, совет халăхĕшĕн нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан Аслă Отечественнăй вăрçă тапхăрĕ пуçланни çинчен калать. Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса калани çинчен асăнса, вăл çапла калать:

— Сталин юлташ çапла каларĕ: ку вăрçă ăпа пуçланă нимĕç фашисчĕсем енчен захватчикла, çаратуллă вăрçă пулса тăрать, Совет Союзĕ енчен—Аслă Отечественнăй вăрçă, тĕрĕслĕхлĕ вăрçă пулса тăрать. Сталин юлташ совет халăхĕ умне, пирĕн Тăван çĕршыв умне тухса тăнă пĕтĕм хăрушлăха уçса пачĕ, кӳ вăрçăра пирĕн çĕршыври халăхсен, çавăн пекех Совет государствин пурнăçĕ пирки ыйту тухса тăчĕ, тесе асăрхаттарчĕ. Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче каппайчăк Гитлер хăйĕн çарне никам та çĕнтереймест тесе сухăрашни халап кăна пулса тăрать, никам çĕнми çарсем çук, гитлерла çара та аркатса тăкма пулать, аркатса тăкмалла та,—терĕ.

Кун хыççăн Краденов юлташ чарăнчĕ. Вăл материала лайăх вĕреннĕ, лайăх ăнланнă. Паллах, вăл пĕтĕм ыйтăва çутатса параймасть.

Малалла Н. Бендин юлташ çапла хушса каларĕ:

— А. Краденов юлташ,—терĕ вăл,— вăрçă мĕнле условисенче пуçланни çинчен каланă чухне вăрçă нимĕç фашисчĕсемшĕн лайăх условисенче пуçланни çинчен, çавна май вĕсем малтанхи вăхăтра ăнăçу тума пултарни çинчен каламарĕ. Астăвăр-ха,—тет вăл малалла,— мĕнле сăлтавсене пула тăшман пирĕн çĕршыва хăвăрт кĕрсе кайма пултарчĕ-ха? Чи малтанах çакна асра тытмалла: Германи пирĕн çине, кĕтмен çĕртен, ăнсăртран тапăнчĕ. Вăл пĕтĕм çарне малтанах пухса хатĕрленĕ, хĕçпăшаллантарнă, пирĕн чикĕсем патне хăйĕн 170 дивизине илсе килсе тăратнă. Çитменнине Германи çарĕ çав вăхăтра мĕнле вăрçмаллине лайăх вĕренсе çитнĕ, опыт туянни çар пулнă. Малтанхи вăхăтра, çавăн пекех, нимĕç çарĕн танксемпе самолетсем ытларах пулнă, фашистла Германишĕн пĕтĕм Европа промышленноçĕ ĕçлесе тăнă. Пăхăнтарнă государствăсем кăна мар, ячĕшĕн нейтралитет тытнă государствăсем те, сăмахран, Турци. Швеци фашистла Германие çине тăрса пулăшнă. Европăра иккĕмĕш фронт çуккине пула фашистла Германи хăйĕн тĕп вăйне пирĕн çĕршыва илсе килчĕ.

Бендин юлташ кунпа пĕрлех фашистла Германи вăрçă пуçласа политика тĕлĕшĕнчен сиен курни çинчен калать.

Ун хыççăн А. Тарасов юлташ аллине çĕклерĕ те ура çине тăчĕ.

— Эпĕ союзниксем иккĕмĕш фронт тăвассине юри тытса тăни çинчен каласшăн,—тет вăл.— Хальхи президент Труман ун чухнех пире кусем ытларах вăрçчăр, пĕр-пĕрне ытларах пĕтерччĕр, Германи Российăна çĕнтерме тытăнсан, пирĕн Российăна пулăшмалла, Росся Германие çĕнтерме тытăнсан, Германие пулăшмалла,—тенĕ. Çапла вĕсем иккĕмĕш фронт уçассине виçĕ çул чарса тăчĕç. Совет Союзĕ пĕр пĕччен Германие çĕнтерме, Хĕвеланăç Европăна, вăл шутра Францие те ирĕке кăларма пултарнине туйса илсен тин вĕсем Франци çыраçне хăйсен çарĕсене антарчĕç.

С. Чирков юлташ, сăмах илсе, Аслă Отечественнăй вăрçă ытти вăрçăсенчен тĕпренех уйрăлса тăни çинчен, ку вăрçă Европăпа Америкăри халăхсем хăйсем никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн туса пыракан кĕрешӳпе пĕрлешсе каясси çинчен, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи халăх массисем хĕснине пула вĕсен правительствисен Совет Союзĕпе союз тумалла пулни çинчен, çапла вара фашистла Германие пĕччен тăратса хăварса, Гитлера хирĕç коалици пулса тăни çинчен калать.

М. Лапин юлташ ыттисем каланă чухне хут татки çине тем çыркаласа ларчĕ. Вăл юлташĕсем хăш ыйтăва çутатмасăр хăварнине паллă тунă мĕн.

— Сталин юлташ йывăр самантра питĕ хăвăрт тишкерсе тухса тĕрĕс хак пачĕ, совет халăхне пĕтĕм ĕçе вăрçă чухнехи пек туса пыма чĕнсе каларĕ,—тет Лапин юлташ.—Çапла вара пирĕн çулпуçăмăр совет халăхĕпе пирĕн мухтавлă çар умне малашнехи ĕçсен программине кăларса тăратрĕ. Кашниннех—Хĕрлĕ Çарăн та, партизансен те, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен те мĕн тумалли паллă пулса тăчĕ.

Пропагандист панă ытти ыйтусем çине те кружок членĕсем ăнланмалла, уçăмлă ответсем пачĕç. Вĕсен отвечĕсем пĕчĕк доклад пекех пулса тăчĕç. Большевиксен партийĕпе Совет государстви ертсе пынипе совет халăхĕ тăшмана хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе туса иртернĕ мероприятисем çинчен кружок членĕ В. Муров юлташ тĕплĕ каласа пачĕ. Промышленность предприятийĕсене хĕвеланăç районĕсенчен хĕвелтухăçне куçарни çинчен каланă чухне, вăл хăй çав вăхăтра пулнă хуласенче мĕн курнине каласа кăтартрĕ, çулпуç сăмахĕпе çĕкленнĕ совет халăхĕн ĕçри хастарлăхне лайăх уçса пачĕ. Бендин юлташ Мускав патĕнче нимĕçсене аркатса тăкни çинчен, çавăн пекех хăй Сталинград патĕнче çапăçни çинчен каласа кăтартрĕ.

Пропагандист кружок членĕсем ответленĕ чухне калаçăва хутшăнмасть, çапла вара пĕтĕм ыйтăва кружок членĕсене хăйсене çутатса пама май туса парать. Ответленĕ чухне кружок членĕ пĕр-пĕр ыйтăва тĕрĕс мар çутатрĕ пулсан та, вăл калаçăва хутшăнмасть, хут çине çырса паллă туса хурать кăна. Çав ыйтăва ытти юлташсем те çутатмасăр хăварсан, вăл ун çинчен занятие пĕтĕçтернĕ чухне калать.

П. Матвеев пропагандист çĕнĕ материала ăнлантарма питĕ ăнăçлă тытăнчĕ. Пĕтĕçтерӳллĕ калаçу сисмесĕрех çĕнĕ материал çине куçрĕ. Вăл занятине лайăх хатĕрленнĕ. Ку вара ăна материала ăнланмалла каласа пама май пачĕ. Ку занятире Матвеев юлташ çавăн пекех ВКП(б) историне вĕренекенсене пулăшмалли альбомри таблицăсемпе усă курчĕ.

Çĕнĕ материала пропагандист кĕскен ăнлантарса пачĕ, тĕп ыйтусем çинче чарăнса, вĕсене тарăн çутатса пачĕ.

Çирĕп дисциплина занятие мĕнле пынинче кăна мар, занятие вăхăтне пăхăнинче те лайăх курăнчĕ. Занятие вăхăтра вĕçленчĕ. Пропагандист çĕнĕ материала ăнлантарма та, килте вулама задани пама та ĕлкĕрчĕ. Тĕп литературăри кирлĕ вырăна вуласа конспект çырма хушнисĕр пуçне, кружок членĕсене Иосиф Виссарионович Сталинăн кĕске биографийĕнчи кирлĕ вырăна тата Совет информаци бюровĕн «Историе пăсса кăтартакансем» ятлă историллĕ справкине пăхса тухма хушрĕ. Илемлĕ литература произведенисенчен А. Федоровăн «Подпольный обком действует», С. Ковпакăн «Путивльрен Карпата çитиччен», А. Медведевăн «Ровно патĕнче», А. Фадеевăн «Çамрăк гварди» кĕнекисене вулама сĕнчĕ.

Занятие пирки çакна кăна каламалла: пур ыйтусем тăрăх та ытларах Н. Бендин, А. Краденов, А. Тарасов, В. Муров, М. Лапин, С. Чирков тата М. Черкунов юлташсем тухса калаçрĕç. Ку лайăх, анчах пропагандист теориллĕ калаçăва ытти юлташсене пурне те явăçтарма тăрăшмарĕ, алă çĕкленĕ юлташсене кăна ирĕк пачĕ.

Кружок руководителĕн журналĕ çинче, вĕреннĕ темăсене çырса пыракан страницăра, занятире райкомран кам пулнине паллă тума хушнă. П. Матвеев юлташ вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах унта «никам та пулман» тесе паллă тунă. Çапла ĕнтĕ, райкомран пĕр çын та пулман.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕнче çакăн пек йĕрке йăлана кĕнĕ: вĕсем занятие йĕркеллĕ иртмен кружоксемпе политшкулсенче кăна пулма тăрăшаççĕ. Лайăх политшкулсемпе кружоксен занятийĕсенче пулса, вĕсен опытне пĕтĕçтерсе, çав опыта ытти кружоксенче сарасси çинчен шутламаççĕ.

Е. АФАНАСЬЕВ,
(«Чăваш Коммуни» корр.).

1852 Н. В. ГОГОЛЬ 1952

Аслă писателĕн чăвашла тухнă кĕнекисем

Вырăс халăхĕн аслă писателĕ Николай Васильевич Гоголĕн ĕмĕрлĕх чаплă кĕнекисене чăваш халăхĕ паян хăйĕн тăван чĕлхипе те вулать. Тĕнчипе паллă писатель вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле Чăваш АССР государство издательствинче тата çак кĕнекесем пичетленсе тухрĕç: «Тарас Бульба», «Иван Ивановичпа Иван Никифорович мĕнле хирĕçсе кайни çинчен», «Ревизор», «Петербург повеçĕсем», «Диканька çывăхĕнчи хуторти каçсем». Кусемсĕр пусне «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманахра ытти уйрăм произведенисем те пичетленсе пычĕç. «Вилĕ ятсем» поэмăпа ытти кĕнекисене те çитес çулсенчех куçарса пĕтерсе вулакансем патне çитерме палăртса хунă.

Пире Н. А. Некрасов сăмахĕсем аса килеççĕ. Вăл, вырăс халăх поэчĕ, халăхăн культури чечекленессе ĕмĕтленсе, çапла çырса хăварнă:

> Хăçан çав вăхăт çитĕ-ши:
> Хресчен сынни Блюхера мар,
> Тăмсай милордсене те мар.—
> Гогольпала Белинские
> Туянĕ пасарта!

Аслă поэт чĕрине çунса ĕмĕтленнĕ вăхăт пирĕн çĕршывра тахçанах çитнĕ. Чуралăхран ирĕке тухнă халăхсен культури, хĕвел ăшăтакан çурхи сад пек, хăвăрт та илемлĕн чечекленчĕ. Халăхсем илемлĕ литературăри аслă классиксен кĕнекисене кăмăлтан юратса, ăнланса вулаççĕ. Вăл кĕнекесен ретĕнче Н. В. Гоголь çырнисем хисеплĕ вырăн йышăнса тăраççĕ.

Н. В. Гоголь кĕнекисене урăх чĕлхене куçарма, паллах, çăмăл мар — йывăр. Унăн произведенисенче «типĕ проза» тени пĕр йĕрке те çук. Вĕсенче—е çунсаçиçсе тăракан ытарайми илем, е çĕкленсе пыракан юрă-ташă сасартăк чарăннă хыççăн килнĕ салхуллă кĕвĕ, е чуна ăшăтса яракан хăйне евĕр кулă, е çĕр çинчи пур ирсĕрлĕхе питлекен хаяр сатира... Аслă писателĕн вилĕмсĕр произведенийĕсенче — чăн-чăн поэзи. Çав поэзие куçараканăн ăсталăхĕ чăннипех те пысăк пулма тивĕç.

«Ытарма çук Днепр тÿлек çанталăкра, вăрмансем витĕр те тусем хушшипе ирĕккĕн те меллĕн, туп-тулли юхса выртнă чухне. Кăшт та хускалмасăр, сас-чÿсĕр юхать вăл. Пăхатăн та, ху та пĕлместĕн, те юхать унăн анлă шывĕ, те юхмасть, кантăкран шăратса тунă пек вăл, ешĕл тĕнчĕ çийĕпе вара тĕкĕр пек йăлкăшакан кăвак çул авкаланса выртнă пек туйăнать, вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть вăл çулăн. Ун пек чухне тÿпери хĕрÿ хĕвеле те çÿлтен пăхма аван, хăйĕн пайăркисене вăл хавасланса кантăк пек çутăлса выртакан уçă шыва чикет, çыранти вăрмансем те хăйсен сăнне шывра яр-уççăн кураççĕ. Ешĕл те кăтраскерсем! Хирти чечексемпе пĕрлех шыв хĕрринче кĕпĕрленсе лараççĕ вĕсем, пуçĕсене пĕксе, шывалла пăхаççĕ, пăхаççĕ те хăйсен çутă сăнне курса тăранаймаççĕ, йăл-ял кулкаласа илеççĕ, турачĕсене тайса сăнĕсене саламлаççĕ. Днепр варрине пăхма хăяймаççĕ вĕсем: хĕвелпе кăвак тÿпесĕр пуçне никам та пăхмасть унта; сайра кайăк вĕçсе çитме пултарать Днепр варрине. Анлă та илемлĕ! Тĕнчере çук унпа танлашма пултаракан юханшыв».

Эпĕ тĕслĕхшĕн, аслă писатель çырни чăвашла куçарсан мĕнле янранине пĕлтерес тесе, юри вăрăм сыпăк çырса илтĕм. Ман шухăшпа, ку сыпăка В. Алагер питĕ тăрăшса куçарнă. Вăл Н. В. Гоголĕн тăван çĕршывпа çутçанталăка чунтан юратниччен килекен хавхалăхне тытса пыма пултарнă—чĕрене çĕклентерме тивĕç сăмахсем илемлĕ те янравлă, кĕвви аслă шывăн лăпкă юхăмĕ пек мăнаçлă.

Тата тепĕр тĕслĕх илсе пăхар:

«Чаплă та-çке Иван Ивановичăн бекеши. Ытарма çук чаплă! Кăтра çухи кăйпа мĕне тăрать! Ах, çĕрçăтасшĕ, мĕнле çуха! Симĕсĕн-кăвакăн йăлтăртатать. Çавăн пек çуха камăн та пулин пур тесен, эпĕ тем хурса тупăшма хатĕр! Пăхăр-ха, тупа та, ун çухине, хăй кампа та пулин каласса тăнă чух аяккинчен пырса пăхăр: куçа йăмăхтарса ярать! Сăмах тупас çук: бархат! кĕмĕл! вут-хĕм! Турăçăм! Микул турă! Мĕншĕн ман çакăн пек бекеша çук-ши! Вăл ăна Агафия Федосеевна Киева кайса киличченех çĕлетнĕччĕ-ха. Пĕлетĕр-и эсир Агафия Федосеевнăна? Вăл, леш, заседатель хăлхине çыртса татаканĕ ĕнтĕ».

Малтан илсе кăтартнă тĕслĕхпе иккĕмĕш тĕслĕх хушшинче нимĕнпе танлаштарма çук пысăк уйрăмлăх пулин те, вулакан халь илнĕ сыпăка кам çырнине, вăл хăш произведенирен иккенне часах чухласа илет. «Н. В. Гоголь» тет вăл тÿрех. Ку—ĕççĕр пурăнса кахала ернĕ улпутсенчен кулакан, крепостла Российйри судсенчен мăшкăлакан произведени, «Иван Ивановичпа Иван Никифорович мĕнле хирĕçсе кайни çинчен» çырнă повесть. А. Ярлыкин ăна оригиналăн стильне çухатмасăр, çăмăл та ăнланмалла чĕлхепе куçарнă.

Н. В. Гоголь çырнă пьесăсенчен чăвашла куçарса «Авлану» (1921 ç. Тал-Мăрса куçарнă), çавнах тепĕр хут 1939 çулта (А. Кăлган куçарнă) тата «Ревизор» (Н. Максимов-Кошкинский куçарнă) комедисене пичетлесе кăларнă. «Ревизор»—аслă писателĕн чи вăйлă произведенисенчен пĕри. Çавăнпа та ăна куçараканăн хăй ĕçĕнче пысăк ответлăх туйса тăмалла пулнă. Н. Максимов-Кошкинский, драматургире нумайранпа ĕçлекен писатель, «Ревизора» куçарнă чух сахал мар вăй хунă туйăнать.

Эпир кунта Н. В. Гоголь кĕнекисене куçаракансен çак пысăк та пархатарлă ĕçĕнче тĕл пулакан çитменлĕхсем çинчен калаçмарăмăр. Вĕсем, паллах, пур-ха. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, куçаракансем писателĕн стильне тĕрĕс ăнланса, тĕрĕс тытса пыни курăнать. Ку ĕнтĕ пирĕн куçарас ĕçри ăсталăх малашне те ÿссех пырассине шантарать.

Н. В. Гоголь, аслă вырăс халăхĕн чаплă классикĕ, тăван çĕршывĕпе çутçанталăкне, хăй тăван халăхне чунтан-чĕререн парăнса юратнă. Вăл тăван халăхăн çăлкуçĕ пек таса, хĕç пек çивĕч, темле тарăн шухăша та уççăн каласа пама пултаракан пуян чĕлхине кăмăлтан савнă. Тĕрĕслĕх уншăн нимĕнрен те хаклă пулнă.

Совет халăхĕ, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă этемлĕх аслă писателĕн пысăк юратуне, чăнлăхпа тĕрĕслĕхне, вичкĕн ăсталăхне сума сăваççĕ. Унăн вилĕмсĕр произведенийĕсене ытти чĕлхесем çине куçарни кашни халăхăн литературине пысăк вăй парать, писательсене çĕнĕрен çĕнĕ кĕнекесем çырма хавхалантарать, вĕсене пурнăçа сарлака илсе кăтартма, тарăнăн шухăшлама ăсталăха вĕрентет.

А. АЛГА.

РУСЬ

(„Вилĕ ятсем" поэмăн XI-мĕш пайĕнчи сыпăк)

...Мĕнле кăна вырăс юратмасть-ши хăвăрт çÿреме? Унăн вĕçĕ-хĕррисĕр тапасиксе тăма пултаракан савăк чун-чĕри, тепĕр чухне «çăва патне!» тесе хума та хатĕр чун-чĕри ăçтан-ха ан юраттăр хăвăрт çÿреме? Хăвăрт пынинче мĕнпур чун хавалне çĕклентерекен кĕвĕ илтĕнет пулсан, мĕнле-ха юратмăн çав хăвăртлăха? Сана темле асамлă вăй çунат çинче çĕклесе пынă пек туйăнать, эсĕ ху та вĕçетĕн, санпа пĕрле пурте вĕçет: çухрăмсем вĕçеççĕ, кÿме ларчăкĕ çинче ларса пыракан купцасем вĕçеççĕ; икĕ енĕпе тăсăлакан йăрăс вăрманти, пуртă сасиллĕ, ула буран сассиллĕ вăрманти хурарах кăвак чăрăшсемпе хырсем вĕçеççĕ; таçта-таçта, çухалакан инçетре, пĕтĕм çул вĕçет; çакă палăрса ĕлкĕреймесĕрех куçран çĕтекен сăнсем вĕлтлетнинче темле хăрушлăх пур; пуç тĕлĕнчи тÿпе кăна, çăмăл пĕлĕтсем кăна, çÿлелле кармашакан уйăх кăна хускалман пек туйăнаççĕ. Эх, тройка! кайăк пек тройка, кам сана шухăшласа кăларнă-ши? чăн та, хăюллă халăх анчах, шÿт тума юратман халăх анчах, çур тĕнчене йышăнса тăракан тикĕс çĕр çинчи халăх анчах сана çуратма пултарнă: шутласа тух вĕççĕр çухрăмсене, куç-пуç алчăраса кайĕ, вĕçне тухаймăн! урапи те тĕлĕнтерсе ямалли мар иккен, тимĕрпе те тыттарман ăна, йывăçран анчах васкавлăн тунă, тăвасса та ийĕпе те пуртăпа çеç тунă, Ярославль таврашĕнчи ĕçчен мужик çак тройкăна çул çине хатĕрленĕ иккен. Ямшăкĕ те нимĕç ботфортне тăхăнман: сухалĕпе алса тулĕсем çеç уйрăмăн курăнаççĕ, ларасса та вăл тем шуйттанĕ çинче ларать, анчах çĕкленсе тăрать те, пушшине сулать те, юррине хускатать те—урхамахĕсем çил пек каяççĕ, кустăрмисен шăлĕсем курăнми пулса, пĕр кăшăл пулаççĕ, пĕтĕм çулйĕр кисренет, иртсе пыракан çын, хăранипе чарăнса, сасартăк кăшкăрса ярать!—вĕçет, вĕçет, вĕçет вара тройка!.. Ав ĕнтĕ инçетре-инçетре тусан тĕтĕрет вăл, сывлăша шăтарса ыткăнать.

Русь, эсĕ те çакă тройка пек, никам хăваласа çитми тройка пек вĕçместĕн-им? Эсĕ пыракан çул мăкăрланса тăрать, кĕперсем кĕмсĕртетеççĕ, эсĕ пуринчен те иртсе каятăн, пурте сан хыçна тăрса юлаççĕ. Сăнаса тăракан этем çак тĕлĕнтермĕш çине пăхса, хытса каять: ку—пĕлĕте çурса аннă çиçĕм мар-ши? мĕне пĕлтерет-ши чун-чĕрене сехĕрлентерекен çак хăвăртлăх? мĕнле улăпла вăй упраçĕ-ши каличчен тĕнче курман çак урхамахсем? Эх, урхамахсем, эх, урхамахсем! Сирĕн çилхĕрсене çавра çил вырнаснă-им? Сирĕн кашни юн тымарĕнче çивчĕ хăлха-им? Çÿлĕ тÿперен юратнă юрă илтĕнсен, урхамахсем йĕсленĕ ăмăрĕсемпе талпăнаççĕ те, чĕрнисемпе çĕре тивмесĕр тенĕ пек, сăнă пек тăсăлса, турă пиллĕхĕпе çунатланса, сывлăшра вĕçеççĕ!.. Русь, ăçта-ши васкатăн капла, чĕнсем-ичĕ хирĕç? Чĕнмест вăл хирĕç. Каçса кайса чÿхенет шăнкăравĕ, кĕрлет те шăхăрать вичкĕн çил пулса тăнă таткаланчăк сывлăш; мĕн кăна пур çĕр çинче—пурте Русь умĕнчен сирĕлет; ытти халăхсемпе патшалăхсем, чалăшшăн пăхса, Руçа çул параççĕ.

Стихван ШАВЛЫ куçарнă.

Вилĕмсĕр комедисем чăваш сцени çинче

Кăçал мартăн 4-мĕшĕнче пирĕн çĕршыв тата малта пыракан пĕтĕм этемлĕх вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине палăртать. Гоголь творчестви тахçанах пĕтĕм тĕнчипе паллă вырăна тухнă, хăйĕн çутă тĕрĕслĕхĕпе, калама çук пысăк ăсталăхĕпе вăл çынсене малта тăракан идейăсемпе хавхалантарнă.

Н. В. Гоголь произведенийĕсем XIX ĕмĕрĕн вăтăрмĕш-хĕрĕхмĕш çулĕсенче Николай патшан тискер реакцийĕ вăхăтĕнче пичетленсе тухнă. Декабристсен восстанийĕнчен хăраса ÿкнĕ Николай патша çĕршыва казарма туса хурасшăн пулнă, ирĕк шухăша хаяррăн пусарса пынă.

Бюрократла-чиновникла Российăн кирревсĕр сăн-сăпатне кăтартса парса, Н. В. Гоголь пĕтĕм помещикла-крепостникла строя питленĕ. Гоголь творчествин революциллĕ енĕ, вăл Российйри пусмăрти массăсене сывăх тăни çавăнтан килет те ĕнтĕ.

Патша Российйинчи крепостникла йĕркене хăюллă питлекен произведени вăл—«Ревизор» комеди. Çак комедире дворянла Российăн тискер сăн-сăпатне çÿлтен пуçласа аяла çитиччен уççăн кăтартса панă. Гоголь эпиграфа илнĕ халăх каланĕ—«Питÿ-куçу сăнсăр пулсан, куçкĕски айăплă мар»—тени комедин пĕтĕм содержанине каласа парать, вăл социаллă комеди пулнине кăтартать.

«Ревизор» комедие малтанхи хут Петербургри Александрийски театр сцени çинче 1836 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче лартнă. Обществăн малта пыракан çыннисем «Ревизор» комедие пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ, реакци лагерĕ писателе тискеррĕн хĕсĕрлеме пуçланă. Белинский, Чернышевский, Герцен çак комедие «Российйри тискер пурнăçа» хыттăн айăплакан произведени вырăнне хурса хакланă.

Паллах, революцичченхи театр Н. В. Гоголь комедийĕнчи пурнăç чăнлăхне пĕтĕм тарăнăшпе кăтартса парасшăн пулман тата вăл çак ĕçе тума та пултарайман. Пирĕн кунсенче кăна, совет театрĕн пысăк опытне пула, Н. В. Гоголь драматургине тĕплĕн кăтартса парас ĕç пуçланчĕ.

Гоголь драматургире ĕçлеме тытăннă вăхăтрах вăл театр çине мĕнле пăхасси те йĕркеленсе çитет. «Театр вăл—аслă шкул, унăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк»,—тенĕ Н. В. Гоголь. Вăл театра пурнăçа тĕрĕс кăтартса пама чĕнет. «Комеди пирĕн обществăллă пурнăçăн ÿкерчĕкĕ тата куçкĕскийĕ пултăр тесен, пурнăçа пĕтĕм чăнлăхĕпе кăтартса памалла»,— тет Н. В. Гоголь репертуар çинчен каланă чухне.

Чаплă писатель вилнĕренпе 100 çул çитнине палăртнă кунсенче эпир Гоголь—чăн-чăн халăх писателĕ пулнине, Белинский каланă пек, унăн произведенийĕсенче «пурнăçăн аслă чăнлăхне» курса савăнатпăр. Вăл ытарма çук чаплă сăмах ăсти. В. И. Ленинпа И. В. Сталин произведенийĕсенче эпир час-часах Н. В. Гоголь сăнласа панă образсемпе усă курнине тĕл пулатпăр. Пирĕн паллă композиторсем, Н. В. Гоголь халăх пурнăçĕ çинчен çырнă произведенисемпе усă курса, чаплă оперăсем çырнă (Чайковский «Черевички», Римский-Корсаков «Майская ночь», Лысенко «Тарас Бульба» çырнă).

Совет Союзĕнчи пур халăхсем те вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь ятне ăшă кăмăлпа асăнаççĕ. Пирĕн театрсем Гоголь пьесисене вырăс чĕлхипе кăна мар, Совет Союзĕнчи пур халăхсен чĕлхипе те лартаççĕ.

1918 çултах тин уçăлнă чăваш театрĕ Н. В. Гоголĕн комедийĕсене лартса парать. Театра курма пыракансем, уйрăмах хĕвелтухăç фронтри боецсем, çак постановкăсене ăшă кăмăлпа йышăнаççĕ.

Чăваш театрĕ малтанхи сезонта «Ревизор» комедие лартса панă. Чăваш АССР халăх артистки Ольга Ивановна Ырзем ун чухнехи спектакль çинчен çапла асилет: «Савăнмалла та, шикленмелле те пулнă, мĕншĕн тесен пирĕн ун чухне опыт пулман, сцена çинче выляс ăсталăх çитмен. Вырăссен аслă писателĕне эпир тин паллашнă, Н. В. Гоголь стилĕпе чĕлхине уçса пама пĕлмен».

Паллах ĕнтĕ, Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн темиçе уйăхранах Гоголĕн аслă творчествине чăваш халăхне, хĕвелтухăç фронтĕнчи боецсене—çамрăк Совет çĕршывне хÿтĕлекенсене паллаштарни пархатарлă ĕç пулнă. Вăл тăшманпа кĕрешме, ĕмĕрсем хушши ĕççыннисен енси çинче ларнă городничисене, ляпкин-тяпкинсене, хлестаковсене тата ытти ирсĕрсене çул çинчен сирпĕтсе яма хавхалантарнă.

1919—1920 çулхи сезонта чăваш театрĕ «Авлану» пьесăна лартса панă. Подколесин рольне П. Н. Осипов, Кочкарев рольне Н. С. Максимов-Кошкинский, Агафия Тихоновна рольне О. И. Ырзем вылянă. 1932 çулта чăваш театрĕ каллех «Авлану» пьесăна лартать. Паллах ĕнтĕ, ун чухне театр ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Гоголь чĕлхи сцена çинчен хăйĕн вăйĕпе янăрайман, ун образĕсене те çителĕклĕ тарăн илсе кăтартайман, мĕншĕн тесен театр çамрăк пулнă-ха, унăн хатĕрленсе çитнĕ артистсем пулман.

1948 çулччен театр Гоголь комедийĕсене урăх лартман. 1948 çулта, Мускаври театр институтĕ çумĕнчи театр студийĕнчен вĕренсе тухнă пултаруллă çамрăк актерсем килсен, театр хăюллăнах «Ревизор» комедие лартма тытăнчĕ.

Хăйĕн творчествăллă пурнăçĕн вăтăр тăваттăмĕш çулĕнче Чăвашсен государство академи театрĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май, иккĕмĕш хут «Ревизор» комедие лартма хатĕрленет. Анчах хальхи условисенче те, квалификациллĕ актерсен çирĕп коллективĕ пулсан та, театр «Ревизор» комедие лартма çав тери тĕплĕн хатĕрленчĕ, мĕншĕн тесен вăл çак йывăр ĕçĕн пĕтĕм ответлăхне лайăх ăнланчĕ.

Пирĕн театрти артистсем вырăс театрĕн историне, вырăссен аслă артисчĕсен творчествăллă биографине тĕплĕн вĕренсе, Н. В. Гоголĕн паллă образĕсене тивĕçлĕ кăтартса парас тесе çине тăрса ĕçлеççĕ. «Ревизор» комедире выляни маншăн, актершăн, çавăн пекех пĕтĕм театр коллективĕшĕн пурнăçри питĕ пысăк савăнăç.

Н. В. Гоголь хăйĕн калама çук пысăк ăсталăхĕпе, куллипе, чăн образĕсемпе пире иртнĕ пурнăçа критикăлла хак пама кăна мар, иртнĕ пурнăçăн юлашкисене хирĕç кĕрешме те пулăшать. Çавăнпа та пĕтĕм совет халăхĕ, аслă писателе юратса, унăн ятне ĕмĕр асра тытать.

Б. АЛЕКСЕЕВ,
Чăваш АССР халăх артисчĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ.

Н. В. ГОГОЛЬ

1.

Вырăс халăхĕн аслă писателĕ Н. В. Гоголь пирĕн çĕршыври халăхсен мухтавĕ пулса тăрать. Совет халăхĕ унăн чаплă произведенийĕсемпе савăнать. Гоголь пысăк чăнлăхпа, гуманизм идейисемпе хавхаланса çырнă произведенисем çĕнĕ, коммунизмлă общество тăвакансене воспитани пама пулăшаççĕ.

Николай Васильевич Гоголь 1809 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче, Миргород çывăхĕнчи Аслă Сорочинцы ятлă местечкăра помещик çемйинче çуралнă. Писателĕн ача чухнехи çулĕсем Украинăра иртнĕ: малтан ашшĕн именийĕнче — Васильевкăра, унтан — Нежинри гимназире. Çак гимназири преподавательсем хушшинче хăй вăхăтĕнче малта пынă çынсем сахал мар пулнă, вĕсем Гоголĕн ирĕке юратакан идейисене аталантарма нумай пулăшнă. Нежинри гимназирен вĕренсе тухсан, Гоголь Петербурга куçнă, кунта вăл часах Пушкинпа çывăх паллашнă. Пушкин çамрăк писателе ÿсме пулăшнă. 1831 çулта Гоголь çырнă «Диканька çывăхĕнчи хуторти каçсем» ятлă калавсен пуххин пĕрремĕш кĕнеки тухнă, кунта вăл халăх пурнăçне илемлĕ поэзи чĕлхипе сăнласа панă. Çак кĕнекене Пушкин пысăк хака хурса мухтанă, вулакансем ăна ырă кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Тепĕр вунă çул хушшинче Гоголь паллă писатель пулса тăрать. Вăл хăйĕн пысăк произведенийĕсене пичетлесе кăларать: 1832 çулта «Хуторти каçсен» иккĕмĕш кĕнеки, 1835 çулта—«Арабески» тата «Миргород» тухаççĕ, 1836 çулта «Ревизор» ятлă вилĕмсĕр комедие сцена çинче лартаççĕ, 1842 çулта «Шинель» тата çав вăхăтри пурнăçăн калама çук чаплă эпопейи—«Вилĕ ятсем» тухаççĕ.

Çав çулсенче писатель вăйне шеллемесĕр нумай ĕçленĕ, Пушкинпа аслă критик-демократ Белинский канаш панине итлесе, хăйĕн произведенийĕсене çырнă, Пушкинпа Белинский ăна идейăпа творчество тĕлĕшĕнчен аталанма нумай пулăшнă. Патша Российйинчи правительствăра тăракан реакциллĕ ушкăнсем «Ревизор» çине тăшманла пăхнине пула, писателĕн ирĕксĕрех тăван çĕршывран вăхăтлăха тухса каймалла пулать. 1836 çултан пуçласа, вăл темиçе çул хушши ют çĕршывра, пуринчен ытла Римра, пурăнать, «Вилĕ ятсем» кĕнекен юлашки пайĕсене çырать.

Начарланнă сывлăхне писателĕн çине тăрса сиплемелле пулнă. Пушкин вилсен Гоголе çав тери пысăк хуйхă çитсе пуснă, вăл хăйне литературăра канаш паракан аслă юлташне çухатнă. Писатель хăй пурнăçĕн юлашки çулĕсенче, йывăр чирпе асапланса, шухăш-кăмăл кризисне пула, «Туссем патне янă çырусенчен суйласа илнĕ вырăнсем» ятлă реакциллĕ кĕнеке çырать. Белинскийĕ малта пыракан вырăс общественноçĕ çак кĕнекене сивлеççĕ. Гоголь хăй пурнăçĕн юлашки вунă çулĕ хушши «Вилĕ ятсем» ятлă произведенин иккĕмĕш кĕнекине çырать, анчах вăл ăна çырса пĕтереймест. Гоголь 1852 çулта мартăн 4-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе) Мускавра вилнĕ.

Революциллĕ демократин аслă трибунĕ Н. Г. Чернышевский çапла çырнă: «...Гоголь Российйăна усă кÿнĕ пек хăй халăхне усă кÿрекен писатель тĕнчере пулманни нумай пулать-ха».

Çак сăмахсем крепостникла йĕрке çинчен хăюллăн чăн сăмах каланă Гоголь творчествине уççăнах çутатса параççĕ. Пушкин хыççăн Гоголь вырăс литературин ялавне çÿле çĕкленĕ, халăх массисене хÿтĕленĕ, этеме юратма чĕнсĕ. Илем хастарлăхĕпе хĕрÿллĕ патриотла туйăмсем ăна эксплуататорла строя критикăланине вăй парса çунатлантарнă. Крепостникла, буржуалла-дворянла пурнăçа, Николай патша йĕркине «айăплакан акт» тенĕ Гоголь творчествине Герцен.

Уйрăм харпăрлăхлă, паразитла общество стройне питлес вăйĕпе Гоголь Хĕвеланăçĕнчи чи пысăк писательсенчен те нумай мала иртсе кайнă. Унăн творчествин нациллĕ уйрăмлăхĕ тата хăйне евĕрлĕхĕ писатель халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăнинчен килнĕ. Халăхпа тачă çыхăнса тăни Гоголе хăй вăхăтĕнчи пурнăçа ĕмĕрлĕхех сăнласа хăварма çутă та тĕрĕс сăрсем тупма пулăшнă.

Гоголь хăйĕн пĕтĕм творчествине халăхăн малашнехи лайăх пурнăçĕшĕн кĕрешнĕ, пуç пулса тăракан классен представителĕсем икĕ питлĕ, этеме курайман, ирсĕр çынсем пулнине, вĕсем ниме те тăманнине тĕрĕс кăтартса панă. Писатель чăн пурнăçран илсе, сăнласа панă образсем крепостной йĕркен киревсĕр, халăха хирĕçле енĕсене ăнланса илме пулăшнă, чиновниксемпе помещиксен Российйи тискер те ирсĕр сăнне уçса кăтартнă.

Гоголь произведенийĕсем ырă шухăшлă та прогрессивлă пулни малта пыракан обществăлла шухăша аталанма калама çук пысăк пулăшу панă.

Малта пыракан вырăс литератури, пирĕн халăхăн историллĕ аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене пула, хăйне уйрăм нациллĕ паллăсем илнĕ, унăн реалистла чăнлăхĕ çавăнтан килнĕ. Вырăс халăхĕн аслă писателĕсем халăха хÿтĕленĕ, малта пыракан идейăсене сарнă, литературăна халăха вĕрентсе воспитани памалли хатĕр, обществăна пысăк усă кÿрекен ĕç, тесе шутланă.

Гоголь хăй вăхăтĕнчи пурнăçа критикăланинче халăх массисен шухăш-кăмăлĕ палăрнă. Çавна пула писателĕн творчестви Белинский ĕçĕпе тачă çыхăнса тăнă, вăл писатель творчествин демократиллĕ енĕсене ăнлантарса, малалла аталантарнă. В. И. Ленин, Белинскипе Гоголь идейисем çинчен каласа, çак икĕ улăпа пĕр-пĕрнипе çывхартнă. Çав идейăсене пула вăл писательсем иккĕшĕ те «Русри кашни йĕркеллĕ çыншăн хаклă пулнă».

Ленин каланă «Белинскипе Гоголь идейисем» мĕнле идейăсем пулнă-ха? Чи малтан — самодержавиллĕ-крепостникла строя нимĕн шеллемесĕр критиклесе, тăрă шыв çине кăларни пулнă. Гоголь шăпах çакна пула Белинскипе çывăх тăнă, шăпах çавна пула унăн творчествине Белинский хăй те, Чернышевский те, Добролюбов та, Некрасов та, Салтыков-Щедрин та хакланă. Чернышевский вырăс литературин аталанăвĕнчи пĕр тапхăра «Гоголь тапхăрĕ» тенĕ çеç мар, вăл Гоголе «хăйĕн пĕлтерĕшĕпе вырăс писателĕсенчен чи асли», тенĕ.

Пушкинпа пĕрле Гоголь вырăс литературинче критикăлла реализм никĕсне хывнă. Вăл çырнă произведенисем ун чухнехи пурнăç явленийĕсене уйрăмах туллин те тĕрĕс çутатса, çав саманан характерĕпе социаллă хирĕçĕвĕсене кăтартса параççĕ. Гоголь реализмĕ пурнăçа пĕтĕçтерсе, сăнласа панипе вăйлă. Писатель хăйĕн произведенийĕсенче пурнăç ÿкерчĕкне панипе çеç çырлахман, вăл пурнăçа шала кĕнĕ, çав пурнăçăн судьи пулнă, ăна пысăк та ырă идеалсен ячĕпе, халăх ячĕпе критикăланă. Общество пурнăçне, çынсен характерне тарăн илсе кăтартни тата художник-реалистăн аслă ăсталăхĕ вырăс литературишĕн критикăлла реализм çулне уçса панă. Вырăссен чи паллă писателĕсем—Тургенев, Гончаров, Островский, Салтыков-Щедрин тата ыттисем те малашне çав çулпа кайнă.

2.

Гоголь произведенийĕсен чи малтан унăн «Вилĕ ятсем» ятлă эпопейи, Пушкинăн «Евгений Онегин» ятлă романĕ пекех, хăй вăхăтĕнчи вырăс пурнăçĕн энциклопедийĕ пулса тăраççĕ: Бальзак произведенийĕсем Францишĕн е Диккенс произведенийĕсем Англишĕн мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, Гоголь произведенийĕсем те Российйăшăн çавăн пекех пысăк вырăнта тăраççĕ. «Вилĕ ятсенче» тата Гоголĕн ытти произведенийĕсенче—Петербург повеçĕсенче («Шинель», «Невски проспект» т. ыт. те), «Ревизор», «Авлану» ятлă пьесăсенче реформăчченхи Российăн тĕрлĕ класĕсемпе сословийĕсен пурнăçне кăтартса панă.

Писатель хăйĕн произведенийĕсенче крепостникла Российăн пурнăçне анлăн ÿкерсе, хăй вăхăтĕнчи типлă çынсене питĕ нумай кăтартса парать. Кунта çĕршывăн аякри тĕксĕм кĕтесĕсенче пурăнакан «ĕлĕкхи помещиксем» те, Манилов йышши нимĕн тумасăр, пурнăçа кĕме пултарайман плансем çинчен шухăшласа пурăнакан йĕрĕнмелле çынсем те, Собакевич пек ĕмĕтсĕр крепостниксем те, Ноздрев пек намăса пĕлмесĕр исĕнланса пурăнакансем те, хăйсене юратакан ирсĕр карьерист-хлестаковсем те, çăткăн аферистсем, буржуалла çĕнĕ шухăшлă чичиковсем те пур. Гоголь эксплуататорла класăн çав представителĕсем шухăш-кăмăл енчен пăсăлса кайнине, вĕсем этем сăнне çухатнине çав тери пысăк вăйпа, пурнăçри пек тĕрĕс кăтартса парать. Писатель çырса кăтартнă образсем пирĕн вăхăта çитиччен хăйсен пурнăç вăйне, хăйсен сăнарлăхне сыхласа хăварнă, вĕсем капитализм тĕнчинчи хальхи чичиковсемпе ноздревсене, çĕнĕ вăрçă чĕртекен, этем сăнĕпе чысне çухатнă ылханлă çынсене—Америкăпа Англири империалистла собакевичсемпе держимордăсене курма пулăшаççĕ.

Гоголь хăй вăхăтĕнчи общество çитменлĕхĕсене çеç мар, шухăш-кăмăл енчен пăсăлса кайнă ирсĕр помещиксемпе чиновниксене çеç мар кăтартса панă. Вăл питлекен кăна мар, вăл, вырăссен ытти аслă писателĕсем пекех, хăйĕн творчествинче ырă идеалсем те кăларса тăратать, лайăх геройсен образĕсене те парать. Белинскиех ĕнтĕ, Гоголе сатирик кăна тесе шутлакан критиксене хирĕçлесе, çапла каланă: «Гоголь çакăн пек типсем — Иван Федорович Шпонька, Иван Ивановичпа Иван Никифорович, Хлестаков, Городничий, Бобчинскипе Добчинский, Земляника, Шпекин, Тяпкин-Ляпкин, Чичиков, Манилов, Коробочка, Плюшкин, Собакевич, Ноздрев пек çынсен сăнарĕсене кăтартса панă. Писатель ирсĕр пурнăçа çав тери ăста ÿкерекен живописец пулнă, хăй çыракан япалана витĕр, тарăн та анлăн курса, пурнăçран ăна туллин те пĕтĕмпех илсе кăтартнă. Анчах мĕншĕн манас-ха, çав Гоголех «Тарас Бульба» поэмăна çырнă, вăл поэмăри геройпа иккĕмĕш вырăнта тăракан çынсем—çав тери пысăк трагедиллĕ характерсем».

«Тарас Бульба» ятлă произведенире халăхăн паттăр ĕçне, унăн хĕрÿллĕ патриотла шухăш-кăмăлне, вăл ирĕке юратнине паха сăрсемпе сăрласа кăтартнă, Тараспа унăн Остап ятлă ывăлĕн çутă образĕсене панă. Анчах положительнăй герой кунта халăх хăй, халăх массисем пулса тăраççĕ. Тарас тата унăн кĕрешÿри тусĕсемпе юлташĕсем — вĕсем халăх

Юлашки 4-мĕш страницăра

„Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем „вăрçă ан пултăр!“ тесе татăклăн калĕç“

Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн çырăвĕ

БЕРЛИН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ çывхарнă май, Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ мĕнпур хĕрарăмсене чĕнсе калакан саламлă çыру йышăннă. Унта çапла каланă:

«Тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи туссем!

Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ 64 çĕршывра пурăнакан, телейшĕн тата миршĕн кĕрешме пĕрлешнĕ 135 миллион хĕрарăм ячĕпе Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕнче сирĕнпе туслă тата пĕр шухăшлă пулнине пĕлтерет.

1952 çулхи мартăн 8-мĕшне халиччен пулман пысăк хавхаланупа уявласа иртерĕç.

Хĕрарăмсем тата ача амăшĕсем вăрçа хирĕç пĕрлешсе тата пĕр тăхтаса тăмасăр кĕрешме кирлине, вăрçа хатĕрленес ĕçе васкаса туса пынине пула вĕсен çывăх çыннисен пурнăçĕ, хăйсен халăхĕн пурнăçĕ умне хăрушлăх тухса тăнине нихçанхинчен те ытларах ăнланаççĕ. Хăйсен ачисем умĕнче пысăк ответлă пулнине вĕсем нихçанхинчен те уççăнрах пĕлсе тăраççĕ.

Хĕрарăмсем умĕнче питĕ пысăк задача—атомлă бомбăн тискер хăрушлăхне ялан лăха пĕтерес залача тăрать. Корейăна, Вьетнама тата Малайăна ишĕлтерекен вăрçăсене хĕрарăмсем чарса лартма тивĕçлĕ. Вăрçа хатĕрленнине хирĕç тата вăрçă бюджечĕсене хирĕç вĕсем ăнланулăн тата çине тăрса кĕрешме тивĕçлĕ. Вĕсен Америка империалисчĕсене тата вĕсем хыççăн пыракансене — Англипе Франци империалисчĕсене—хăйсен ирсĕр планĕсене пурнăçа кĕртме чармалла, çав плансене пурнăçа кĕртни вара халăхсене юнпа куççуль тинĕсне путарнă, этемлĕхе пĕтерсе тăкнă пулĕччĕç.

Эпир, ача амăшĕсен прависене сыхласа хăварассишĕн татăклăн тăратпăр, эпир хамăр паракан пурнăçа пĕтерсе тăкмалла мар тума хушатпăр. Пирĕнпе пĕрле нумай миллионсем. Пирĕнпе пĕрле этемлĕхĕн сурри. Эпир миршĕн кĕрешсе пысăк ĕç тăватпăр. Мир вăйĕсене шутласа та кăларайрас çук. Вĕсем кашни кун çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваççĕ. Халăхсем хирĕç тăнипе тата хĕрарăмсем хирĕç тăнипе çес халиччен хăрушшăн юн юхтарассине чарса тăма май килчĕ.

Эльбăран пуçласа Ăпкă океана çити сарăлса выртакан анлă çĕр çинчи 800 миллион арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен правительствисемпе пĕрле миршĕн тăрăшса ĕçлессĕ. Совет Союзĕнче нумай миллион хĕрарăмсем çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли питĕ пысăк плансене пурнăçа кĕртессĕ, вĕсем пулас ăрусене халиччен пулман ырă пурнăç туса параççĕ. Азипе Африкăри нумай миллионшар арçынсемпе хĕрарăмсем ют çĕршыв пусмăрçисене хăваласа кăларассишĕн, хăйсен ачисене чӳралăхпа выçă вилĕмрен хăтарасшăн кĕрешĕве çĕкленессĕ. Европăпа Америкăри нумай миллионшар арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен правительствисем вăрçă пуçласа ярса пысăк инкек кӳме хатĕрлекен плансене хирĕç тăраççĕ.

Хĕрарăмсем! Ача амăшĕсем! Эпир пурте телейлĕ те мирлĕ пурăнасшăн. Хамăр ачасене юратни пире пĕрле кĕрешме пĕтĕçтерет. Эпир хальхи вăхăтра мире сыхласа хăварассишĕн тăрăшса йывăрлăхсем тӳссе иртеретпĕр. Анчах çакă вăл, эпир вăрçă хăрушлăхне сирсĕ яраймасан, вăрçă пире кӳрес инкекрен темиçе хут çăмăлтарах.

Çынсен пĕчĕк ушкăнĕ çеç вăрçăшăн тăрать. Эпир вара—шутсăр нумайăн. Эпир хамăрăн ирĕке пурнăçа кĕртсе пырсан, эпир татăклăн кĕрешсен, эпир çак кĕрешĕве миллионшар ытти хĕрарăмсене хутшăнтарсан,—вăрçă пулас çук.

Мире сыхласа хăварассишĕн тата ытларах вăй хурса кĕрешер. Пĕтĕм тĕнчери ачасене хӳтĕлемелли конференцие ăнăçлă ирттерме мĕн кирлине пурне те тăвар, мĕншĕн тесен çав конференцире кашни ачана пурăнма, сывлăхлă пулма тата пĕтĕм тĕнчери мир условийĕсенче вĕренсе ӳсме право парас тесен мĕн тума кирлине кăтартса паракан решенисем йышăнмалла. Мартăн 8-мĕш кунĕ мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсене вăрçа хирĕç пыракан юхăма хутшăнма, вăрçă планĕсене хирĕç çĕнĕ вăйпа кĕрешмешкĕн çĕкленме, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен виççĕмĕш конгресне пухас юхăма хутшăнтарма чĕнекен кун пулса тăтăр, çав конгресра пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем «вăрçă ан пултăр!» тесе татăклăн тухса калĕç.

Алжирти ĕççыннисем Индо-Китайри вăрçа чарса лартма ыйтаççĕ

ПАРИЖ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат ĕнер Оран хулинче митинг пулни çинчен пĕлтерет. Унта виçĕ пин ĕççынни пухăннă. Ăна Алжирти коммунистсен партийĕ организациленĕ. Митинга Францин коммунистсен партийĕн центральнăй комитечĕн секретарĕ Андре Марти хăмах тухса каланă.

Митинга пухăннисем Франци министрсен совечĕн председателĕ Фор патне телеграмма яма йышăннă. Телеграммăра çапла каланă: Оранри ĕççыннисем «Францин империалистла правительствине тата парламентра правительство майлă тăракансен ытларахăшне тарăхса питлессĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Индо-Китайри вăрçа алжирецсен пурнăçне пĕтерессĕ». Унтан телеграммăра çапла каланă: «Митинга пухăннисем Индо-Китайри вăрçа халех чарса лартма, экспедици корпусне каялла таврăнма требовани лартаççĕ», тенĕ.

Сидней портĕнчи рабочисен забастовки

СИДНЕЙ, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Сидней портĕнчи рабочисем забастовка пуçланă. Вĕсем ĕнер забастовка тунă 600 рабочипе пĕр майлă пулни çинчен, çав забастовка хутшăннă çынсене ĕçрен кăларса янине хирĕç протестлени çинчен пĕлтернĕ. Портра 44 карап тăрать. Вĕсем çине грузсем тиемелле е вĕсем çинчи грузсене пушатмалла. Халĕ унта грузсене тиес тата пушатас тĕлĕшпе пĕр рабочи те ĕçлемест.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерчĕ:

Корея Халăх çарĕн чаçĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç упрăм вырăнсенче çапăçнă.

Паян тăшман самолечĕсем Пампхо, Сукчхонь тата Вонсан районĕсене вĕçсе пырса тапăннă. Корея Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тăшманăн икĕ самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян пĕлтернĕ тăрăх, Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтересçĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсем хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн виçĕ самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсен ушкăнĕ, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсанпа Ковонь районĕсене тапăннă пулнă.

Америка агрессорĕсем Корейăра çаплах бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курасçĕ

Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ февралĕн 29-мĕшĕнче Корейăри фронтран çапла пĕлтернĕ:

Февралĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 25-мĕшчен Америка самолечĕсем Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен позицийĕсем çине тата тылри тĕрлĕ районсем çине вĕлерекен бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем темĕн хут пăрахнă.

Февралĕн 17-мĕшĕнче Америка самолечĕсем бактерисем ертнĕ хурт-кăпшанкăсене тултарнă пĕчĕк коробкăсене Понрэхоран хĕвелтухăçнерехри тата Пчхоньрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăна пăрахнă. Коробка усăлнă чухне, унтан ӳпресем ушкăнĕ-ушкăнĕпе вĕçсе тухнă. Февралĕн 18-мĕшĕнче Америка самолечĕсем ӳпресем нумай тултарнă коробкăсене Намчхоньрен кăнтăрарахри вырăнпа тата Ханпори районне пăрахнă. Февралĕн 19-мĕшĕнче Америка самолечĕсем ӳпре йышши хурт-кăпшанкăсене Сукчхоньрен сурçĕр-хĕвеланăçнерехри Понмионни, Пакчунни тата Понпонни районĕсенче тата Сукчхоньрен сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Пагибион, Сансиприбийон районĕсенче сапса ӳренĕ.

Хурт-кăпшанкăсем пăрахса хăварнă вырăнсенче, çӳлте асăннă пилĕк пункра пур çĕрте те, çав хурт-кăпшанкăсем пĕр пин тăваткал метртан пуçласа виçĕ пин тăваткал метр пысăкăш вырăна сарăлнă, пĕр тăваткал метр çинче, çĕр ӳпререн пуçласа çичçĕр ӳпре таран пулнă.

Февралĕн 20-мĕшĕнче Америка захватчикĕсем Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен Кухваририен сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Пэсобдон районĕнчи позицийĕ тĕлне ӳпре евĕр хурт-кăпшанкăсем пăрахнă.

Февралĕн 22-мĕшĕнче Америка самолечĕ Вонсан хулинчен кăнтăртарахри тата Сингосанран сурçĕртерехри Сокмансин Непури районĕсенче бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем тултарнă пилĕк коробка пăрахса хăварнă. Çавăн чухне икĕ коробка усăлнă, вĕсенчен ӳпресем нумай вĕçсе тухнă.

Февралĕн 23-мĕшĕнче Сибионнирен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Сухари патĕнче Америка самолечĕсем пăрахса хăварнă хура ӳпресем нумай пуррине палăртнă.

Февралĕн 24-мĕшĕнче Америка самолечĕ Кухваририен сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри айлăма тата 131-мĕш номерлĕ сăрт çине листовкăсем пăрахса хăварнă. Çав листовкăсем çинче бактерисем ертнĕ хурт-кăпшанкăсем пулнă.

Февралĕн 25-мĕшĕнче Сукчхоньрен сурçĕртерехри Пэсокри патĕнче Америка самолечĕсем сарса сӳрепĕ ӳпресене тупнă. Çав ӳпресен пуçĕсем пĕчĕк, вĕсен сунăчĕсен аял енче шурă пăнчăсем пулнă. Çав районтах шăна евĕрлĕ хуртсем (москитсем) тупнă, вĕсем çинче шурă пăнчăсем пулнă.

Америка агрессорĕсем халĕ те Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курма чарăнманни Корея халăхне, Корея Халăх çарĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата Китай халăх добровольцĕсене хытă тарăхтарать. Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем тата граждански çынсем çав хурт-кăпшанкăсене пĕтерме пур майсемпе те тăрăшаççĕ. Ĕрскен чир-чĕрсем саралассине хирĕç мерăсем йышăнас тĕлĕшпе нумай ĕçлессĕ.

Корейăна пĕтĕм тĕнчери юрист-демократсен ассоциацийĕн комиссийĕ пырса çитнĕ

ПХЕНЬЯН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăна пĕтĕм тĕнчери юрист-демократсен ассоциацийĕн комиссийĕ пырса çитнĕ. Комисси составĕнче: Великобританири, Францири, Бельгири, Италири, Бразилири, Австрири тата Польшăри юрист-демократсен представителĕсем. Çав комиссие Корейăна ассоциаци йышăннă решени тăрăх, унта интервентсем тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче йышăннă правăсен мĕнпур нормисене пăсса тискер ĕçсем тунине тĕпчесе пĕлме янă.

ТĔНЧЕРИ ÇĔРШЫВСЕН МУСКАВРИ ЭКОНОМИКĂЛЛА КАНАШЛĂВЕ УМЕН

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Лаш коттон продактс компанийĕ» президенчĕ Лаш çапла каланă: тĕнчери çĕршывсен Мускавра пулмалли экономикăллă канашлăвне Америка делегацине эпĕ ертсе каятăп, пирĕн самолет мартăн 21-мĕшĕнче Прагăна тухса каймалла, тенĕ.

Тунисри ĕçсем

ПАРИЖ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Се суар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 29-мĕшĕнче Тунисра халăх йышлă хутшăннă демонстрацисем пулса иртнĕ. Тунис хулинче пысăк демонстраци пулнă. Унта ĕççыннисем арабсем пурăнакан кварталсенчен виçĕ пысăк колоннăпа тухнă та хула варринчи площадьлле, Францин генеральнăй резиденчĕн дворецĕ патнелле пыма тытăннă. Полици демонстрантсене хирĕç пăшалпа пеме пуçланă. Аманнисем нумай пулнă. Нумай çынсене тытса хупнă.

Египетăн çĕнĕ правительстви

ПАРИЖ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентствин корреспонденчĕ Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Ахмед Нагиб Хилали-паша Египетăн çĕнĕ правительствине туса йĕркеленĕ. Правительствăра вăл премьер-министр вырăнне йышăннă. Шалти ĕçсен министрĕ тата çар министрĕ пулма Ахмед Мортла эль-Мараги-пашана, ют çĕршыв ĕçсен министрĕ пулма Абдель Халек Хасун-пашана уйăрса лартнă.

Çĕнĕ правительствăн малтанхи ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан çакăн çинчен пĕлтерет: Египет правительстви паян касхине Каирти I-мĕш Фуад ячĕпе тăракан университета хупнă, «ăна хăçан уçасси çинчен малашне пĕлтерĕпĕр» тенĕ. Рейтер агентстви пĕлтернинчен çакă курăнать: çав университета унти студентсене хĕсĕрлес шутпа хупнă. Университет студенчĕсем патриотла демонстрацисене пумайăшне хутшăнса, Англи çарĕсене Египетран илсе кайма ыйтнă пулнă.

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Египетăн çĕнĕ премьер-министрĕ Ахмед Нагиб Хилали-паша парламента пĕр уйăхлăха салатса яма йышăннă.

Н. В. ГОГОЛЬ

Юлашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра

представителĕсем. Шăпах халăхпа унăн представителĕсем, нацин паха енĕсене кăтартса паракансем хăюлăхпа, хăйсен тивĕçне тытнипе, тăван çĕршыва парăннипе, вăйлă характерĕпе, пысăк ăсĕпе палăрса тăраççĕ.

«Вилĕ ятсем» поэмăра та пуçламăшĕнчен вĕçне çитиех ырă идеал витĕрех курăнать, кунта чичиковсемпе плюшкинсен мĕскĕн тĕнчине хирĕç улăп пек çирĕп, çутă талантлă халăх, вĕçĕ-хĕррисĕр аслă халăх Русĕ тăрать. Гоголь хавхаланса çапла калать: «Мĕн шутлать çав куçпа виçейми аслă çĕр? Кунта мĕншĕн, санра мĕншĕн вĕçĕ-хĕррисĕр шухăш çуралас мар, ху та вĕçĕ-хĕррисĕр пулсан, кунта мĕншĕн улăп пулас мар, вăйне кăтартма та, çӳреме те ăна вырăн ирĕк пулсан?»

Поэмăра пуçламăшĕнчен вĕçне çитиех халăх Российин образĕ тухса тăрать. Поэмăн сатирăллă, питлекен хăвачĕ те халăх теминчен, Тăван çĕршыв образĕнчен тухса тăрать.

Хăйĕн произведенийĕсене çырса, Гоголь вĕсенче ырă идеалсене, вырăс халăхĕн, хăйĕн тăван çĕршывĕн илемĕпе хăватлă вăйне мухтанă, ăна вăл малалла виркĕнекен «вĕçен тройка» образĕнче кăтартса панă: «Русь, ăçта-ши васкатăн капла, чĕнсемччĕ хирĕç? Чĕнмест вăл хирĕç. Кăçса кайса чӳхенет шăнкăравĕ, кĕрлет те шăхăрать вичкĕн çил пулса тăнă таткаланчăк сывлăш; мĕн кăна пур çĕр çинче—пурте Русь умĕнчен сирĕлет; ытти халăхсемпе патшалăхсем, чалăшшăн пăхса, Руçа çул параççĕ».

3.

Гоголь, хăй вăхăтĕнчи крепостникла пурнăçа питлесе, малалли ăрусемшĕн те аслă писатель-реалист пулса юлнă. Вăл сăнласа панă образсем хăйсен пурнăç чăнлăхĕпе, вĕсем пурнăçа пĕтĕçтерсе, сăнласа кăтартса панипе сыхланса юлнă.

Гоголь хăйĕн образĕсене çав тери вăйлă сăнласа панине Белинский те палăртнă. Гоголь сăнласа панă Чичиков образĕн пĕлтерĕшĕ, пуç пулса тăракан классен представителĕсен икĕ питлĕхне, принципсăрлăхне, ултавĕпе аферизмне кăтартакан образ пĕлтерĕшĕ çинчен калани май, Белинский çав образ пĕтĕм тĕнчипех сарăлни çинчен çырнă: «Çав чичиковсемех, анчах урăх тумтирпе: Францире, Англире вĕсем вилĕ ятсене сутăн илмеççĕ, ирĕклĕ парламент суйлавĕсенче чĕрĕ çынсене укçа парса çавăраççĕ!.. Парламентри киревсĕр этем вырăнти земски судри пĕр-пĕр киревсĕр этемрен ытларах вĕреннĕ; анчах чăннипе вĕсем иккĕшĕ те пĕри тепринчен лайăхах мар».

Гоголь—сатирик, Гоголь — помещикла-буржуалла пурнăçа питлекен гениллĕ художник-реалист пулса, хăй творчествин пурнăç вăйне малалли ăрусемшĕн те пĕтĕмпех сыхласа хăварнă. Пирĕн çĕршывра аслă писатель ятне пĕтĕм халăх юратса хисеплет. Октябрьти Аслă революци хыççăн унăн произведенийĕсене 20 миллион экземпляр, Совет Союзĕнче пурăнакан 40 халăх чĕлхи çине куçарса кăларнă. Унăн «Ревизор» ятлă вилĕмсĕр комедийĕ çĕр çул ытла сцена çинчен каймасть, вăл вырăс актерĕсен шкулĕ пулса тăчĕ.

Ленинпа Сталин революци тăшманĕсене—реакционерсене, либералсене, меньшевиксене хирĕç кĕрешме темиçе хутчен те Гоголь образĕсемпе усă курнă.

Совет литератури Гоголе нумай тивĕçлĕ. Аслă писатель-реалист пурнăçа таран та тĕрĕс кăтартса пама, характерсене сăнласа ӳкерме, кашни образа илемлĕ содержани пама тĕслĕх кăтартать. Çав тери чаплă чĕлхе ăсти пулса, вырăс чĕлхине тĕлĕнмелле лайăх пĕлсе, Гоголь совет писателĕсене янăраса тăракан сăмах илемĕ, калама çук пысăк сăмах пуянлăхĕ, илемлĕ çырас ăсталăх панă.

Гоголь тĕнчере калама çук пысăк вырăнта тăрать. Унăн произведенийĕсем вырăс литератури пĕтĕм этемлĕх культурине хывнă пысăк пуянлăх пулса тăраççĕ.

Гоголь творчестви, иртнĕ вăхăтри пĕтĕм прогрессивлă искусствăпа прогрессивлă литература пекех, мирпе демократи лагерĕн хĕçпăшалĕ, империалистла реакцие хирĕç, Америкăпа Англири империалистсем хатĕрлекен çĕнĕ юнлă вăрçа хирĕç кĕрешмелли хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Çавăнпа та Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ, малта пыракан пĕтĕм этемлĕх ирĕкне палăртса, çĕр чăмăрĕ çинчи тĕрлĕ çĕршывсенче культурăри паллă кунсене, çав шутрах вырăс халăхĕн аслă писателĕ-патриочĕ, хĕрӳллĕ гуманист—Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине палăртма йышăнчĕ.

Гоголь хăй халăхĕн ирĕклĕ те илемлĕ пурнăçĕ çинчен ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пирĕн аслă совет саманинче çитрĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пула пирĕн çĕршывра çынна çын эксплуатацилессине пĕтернĕ, вырăссен аслă писателĕ кăмăлланă ырă та патриотла идеалсем совет халăхĕн пурнăçне кĕнĕ.

Проф. Н. СТЕПАНОВ.

Хамăр республика тăрăх

Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисемпе работницăсем пушă вăхăта усăллă та культурăллă ирттереççĕ. «Электрик» клуб çумĕнче тĕрлĕ художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсем 400 çынна ытла пĕрлештерсе тăраççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Электрик» клубри вырăс халăх юррисен квартечĕ (сулахайран сылтăмалла): руководителĕ Н. Иголкин, квартет участникĕсем: Л. Лупанова, Н. Тренькова токарьсем, А. Васильева наладчица тата О. Васильева токарь.

В. НЕРУБЕНКО фотоӳкерчĕкĕ.

Н. В. Гоголь кунĕсене паллă тăваççĕ

Шупашкарти филармони залĕнче вырăссен паллă писателĕ Николай Васильевич Гоголь вилни 100 çул тултарнине паллă туса лекци-концерт пулса иртрĕ. Концерта чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ, симфониллĕ оркестрĕ тата республикăри радиоинформаци солисчĕсем хутшăнчĕç.

Концертра симфониллĕ оркестр Н. В. Гоголь произведенийĕсен сюжечĕсем тăрăх вырăссен чаплă композиторĕсем çырнă оперăсен хăшпĕр сыпăкĕсене вылянă, уйрăм солистсем арисене юрласа пачĕç.

Концертăн программинче Римский-Корсаков çырнă «Майская ночь» увертюрийĕ, «Ночь перед Рождеством» оперăн сыпăкĕ, Мусоргскин «Сорочинская ярмарка» оперăн «Летний день в Малороссии» ятлă сыпăкĕ, Чайковский çырнă «Черевички» оперăри «Пляска запорожцев» тата ыттисем те пулчĕç.

Концерт пысăк ăнăçлăхпа иртрĕ.

А. СЕРГЕЕВ.

* * *

СОВЕТСКИ. Вырăссен аслă писателĕ Николай Васильевич Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнине районти ĕççыннисем анлăн паллă тăваççĕ. Писателĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен лекцисемпе докладсем пулаççĕ, каласусем ирттереççĕ.

Советскинчи вăтам шкул коллективĕ, аслă писателе асăнса, мартăн 4-мĕшĕнче литература касĕ ирттерет. Унта вĕренекенсем Гоголь произведенийĕсенчи уйрăм сыпăксене вулаççĕ, писатель произведенийĕнчен инсценировка лартса параççĕ.

Шкулта «Хĕлхем» ятлă литература журналĕ тухса тăрать. Гоголе асăнса кружок членĕсем журналăн çĕнĕ номерне кăларнă. Унта Гоголь произведенийĕсенчи сыпăксене, вĕренекенсем Гоголе асăнса çырнă сăвăсене, шкулта Гоголь темисем тăрăх çырнă чи лайăх сочиненисене кĕртнĕ.

Аслă писателĕн пурнăçĕпе творчествине кăтартакан витрина йĕркеленĕ.

Н. МАРТЫНОВ.

* * *

ЧКАЛОВСКИ. Патăрьелĕнчи И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан педагогика училищинче Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă куна паллă тума комисси йĕркеленĕ. Гоголĕн «Тарас Бульба», «Шинель» повеçсем тăрăх вулакансен конференцийĕсене ирттереççĕ.

Училищĕре йĕркеленĕ витрина аслă писателĕн пурнăçĕпе тата ĕçĕпе паллаштарать. Мартăн 4-мĕшĕнче училищĕре литература касĕ пулать. Унта Н. В Гоголь çинчен доклад итлессĕ, вĕренекенсем Гоголĕн хăшпĕр произведенийĕсене вуласа параççĕ. Музыка преподавателĕ С. Черкасова юлташ ертсе пыракан хор кружокĕ писатель произведенийĕсем тăрăх вырăс композиторĕсем çырнă оперăсенчен йĕркеленĕ концерт парать.

Гоголь произведенийĕсене лайăх вулакансен конкурсĕ пулса иртет.

Г. ЛИСИН.

* * *

ЕТĔРНЕ. Палтайри вăтам шкулта Н. В. Гоголе асăнса литература касĕ пулать тата унăн произведенийĕсене лайăх вулакансен конкурсне ирттереççĕ.

Аслă писателĕн произведенийĕсем тăрăх тунă ӳкерчĕксен выставкине йĕркеленĕ. И. Охторов ертсе пыракан литература кружокĕнче Н. В. Гоголĕн чылай произведенийĕсене вуласа сӳтсе явнă. Шкулти комсомолецсемпе çамрăксем «Ревизор» пьесăпа лартса параççĕ.

Г. МУРЗАЕВ.

ФИНАНС ПЛАННЕ ТУЛТАРЧĔÇ

МУРКАШ. (Телефонпа). Районти Мăн Янăш ял Совечĕ (председателĕ Г. Тихонов юлташ), Йӳçкасси ял Совечĕ (председателĕ А. Дмитриев юлташ) 1952 çулхи пĕрремĕш кварталти финанс планне срокчен тултарма обязательство йышăнса социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Совет Çарĕ 34 çул тултарнă тĕле укçа-тенкĕ пухмалли плана Мăн Янăш ял Совечĕ 111,4 процент, Йӳçкасси ял Совечĕ 100 процент тултарчĕç.

ПРОДУКЦИ ТУСА КĂЛАРАССИ ӲСЕТ

Чăвашпотребсоюз продукци парса тăракан организацисемпе 1952 çулшăн 413 миллион та 421 пин тенкĕлĕх договор турĕ.

Кунсăр пуçне промкоопераци артелĕсемпе, вырăнти промышленность предприятийĕсемпе те договор тунă. Вĕсем хуçалăхра кирлĕ таварсем парса тăмалла.

Кăçал продукци туса кăларасси иртнĕ çулхинчен чылай ӳсмелле. 1951 çулта Чăвашпотребсоюз фончĕсем 1950 çулхинчен: пир-авăр енĕпе 8 миллион тенкĕлĕх, çĕвĕ çĕлемелли хатĕрсем енĕпе 2 миллион та 200 пин тенкĕлĕх, чăлхасем енĕпе 2 миллион тенкĕлĕх, резинăран тунă атă-пушмак енĕпе 2 миллион та 500 пин тенкĕлĕх ытларах ӳснĕ.

Хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн

Иртнĕ вырсарникун Шупашкарти «Молния» спорт обществин хоккей команди Чапаевски поселок командипе тĕл пулса вылярĕ. Вăйă стадион хуçисем 3:2 шутпа çĕнтернипе вĕçленчĕ. Çапла ĕнтĕ «Молния» спорт обществи команди, пур командăсемпе те тĕл пулса выляса, республика чемпионĕн ятне илчĕ. Çак команда пур командăсенчен те выляса илнĕ.

Канашри «Локомотив» спорт обществин хоккеисчĕсем Етĕрнери «Искра» спорт обществи командипе тĕл пулса вылянă. Етĕрнесем çак вăйăра 2:1 шутпа çĕнтернĕ. Анчах пĕр кун маларах вĕсем Шупашкарти «Спартак» спорт обществи командине 1:6 шутпа выляса янă. Спартаковецсем иккĕмĕш вырăнта пыраççĕ. Улатăрти «Локомотив» спорт обществипе Çĕмĕрлери «Урожай» спорт обществи командисем 1:1 шутпа вылянă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Предприятисемпе строительствăра ĕçлеме рабочисем пухакан Чăваш республикинчи кантур (оргнабор кантурĕ) Свердловск облаçĕнчи Серов хулинче, Молотовск облаçĕнчи Закамск тата Боровск хулисенче тата Тула облаçĕнчи Черепетскра ĕçлеме рабочисем пухать.

Асăннă хуласенчи предприятисенче ĕçлеме кайма договор тунă рабочие вăхăтлăх пулăшу (ăна каялла илмеççĕ) 150—200—500 тенкĕ, суточнăй 10—15 тенкĕ, ĕç вырăнне çитме тата договор срокĕ тухсан каялла килме çул укçи параççĕ, çавăн пекех кашни рабочие 240 килограмм таран, рабочипе пĕрле каякан çемьери кашни çынна—80 килограмм таран багаж илсе кайма укçа параççĕ.

Икĕ çул е унтан ытларах ĕçлеме договор тунă рабочие вăхăтлăх пулăшу икĕ хут нумайрах параççĕ.

Промышленноçра ĕçлеме каймалли договора оргнабор кантурĕн районти уполномоченнăйĕпе е Шупашкар хулинче Заводской урамри 34-мĕш çуртра тума пулать.

Чăваш республикинчи оргнабор кантурĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00637. Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20,000 экз.